ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

45 (4407) №, 2014, ноябрь (чӳк), 6 (1931 çулхи январĕн (кăрлачăн) 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ÇĔНĔ ĂРУ

## Туслă çемье



**Уйкас Явăшри Сергей Владимировичпа Алина Витальевна Митрофановсен куç тулли телейĕ – ачисем. Тăххăрмĕшĕнчи Настьăпа саккăрмĕшĕнчи Володя килес çул пĕрремĕш класа кайма хатĕрленекен Валерияна тата Викторияна çав тери юратаççĕ.**

– Эпĕ аттепе çывăратăп. Унăн ытамĕнче мана ăшă-ăшă, ырă-ырă, – мăнаçланать лара-тăма пĕлмен Виктория савăнса.

– Мана аннепе канлĕ. Хытă ыталатăп та хам епле çывăрса кайнине те сиссе юлаймастăп, – шăппăн çеç пуплерĕ çемçе кăмăллă Валерия.

Аслăрах ачисен çумне мĕн пĕчĕкрен куршанак çыпçăннă. Халĕ вĕсен аллинче кирек епле ĕç те выляса тăрать. Настя пӳрт-çуртра кăштăртатать, тирпейлет, тасатать. Володя вара выльăх-чĕрлĕх пăхать.

– Çемьере ывăл çуралсан мăшăрăм ăна ашшĕ ятне хурас терĕ. Ахальтен мар. Вăл çиччĕре чухне юратнă çынни, аслашшĕ, вăхăтсăр çĕре кĕнĕ. Асламăшĕ çичĕ ачапа тăлăха юлнă. «Тĕпренчĕке пĕччен ура çине тăратаймастăн. Йывăр килет хăвна. Кĕçĕннисене интерната памалла», – тенĕ тăлăх арăма. «Ан та шухăшлăр, хамăн пепкемсене ниçта та ямастăп!» – тенĕ çирĕппĕн хĕрарăм. Умри йывăрлăхсене çĕнтерсе тĕпренчĕкĕсене ура çине тăратнă-çке манăн хуняма. Акă нумай пулмасть унăн 75 çулхи юбилейне паллă турăмăр. Малашне те ăна çирĕп сывлăх сунатпăр. Унччен нуши-тертне чылай курнă вăл. Халĕ вара ачисемпе, мăнукĕсемпе савăнса çеç пурăнтăр, – терĕ Алина Витальевна.

Митрофановсен аслă тĕпренчĕкĕсем шкултан лайăх вĕренсе тухса юратнă профессие алла илме, унпа ĕçлеме хăпартланса пурăнаççĕ.

– Футболла выляма юрататăп, çавăнпа футболист пулас килет, – палăртать хăй шухăшне Володя.

Настя хăй ĕмĕтне хальлĕхе вăрттăнлăхра тытать.

– Куç ӳкересрен хăратăп, – терĕ вăл шӳтлесе.

– Ӳссен кам пулассине эпĕ те каланă пулăттăм, анчах пĕчĕк-ха. Пĕрремĕш класа çӳреме пуçлар, тен, ун чухне сире хамăр шухăша пĕлтерĕпĕр, – терĕ Виктория хавассăн.

*Луиза ВАСИЛЬЕВА.*

Вăрнар районĕ,
Уйкас Явăш.
**АВТОР сăнӳкерчĕкĕ.**

# Ăшă саламсем




Юнашар яланах çывăх çын пурри, вăл сана хуть те мĕнле инкекрен çăлма хатĕр- ри, эсĕ ситĕнӳ тăвасса ĕненни, йывăр чухне çĕкленме пулăшни мĕн тери аван иккенне пичче пуррисем лайăх туяççĕ. **Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кайри Шĕнерпуç ялĕнче пурăнакан пиччене Максим Николаева** чи ăшă сăмахсем калас килет.



Хаклă Максим! Çуралнă кун ячĕпе йышăнса илсем манран хĕрӳллĕ салам. Тавах сана çак çут тĕнчере пурришĕн! Пурнăçу асамлăхпа тултăр, унта кулянупа салхулăх валли вырăн ан тупăнтăр, кунсеренех çутă ĕмĕт патне çывхарса пымалла пултăр! Пурнăçра ĕненни паха. Юратăва, ăнăçăва, ситĕнĕве ĕнен, вара çакă пĕтĕмпех пурнăçланĕ, телей хайне нумай кĕттермĕ!

***Йăмăкĕ Милена ТЕРЕХОВА.***

**Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Çĕнĕ Атикасси ялĕнче пурăнакан Владимир Чангайкина** 16 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Турă панă пурнăçпа савăнса пурăнмалла пултăр, утас çулĕ çинче ырă кăмăллă çынсем ытларах тĕл пулччăр, сăн-питĕнче яланах йăл кулă çуталтăр, сывлăхĕ нихăçан та ан хавшатăр! Эсĕ пурришĕн эпир чунтанах савăнатпăр!

***Чангайкинсен, Давыдовсен çемйисем.***



**Чĕмпĕр тăрăхĕнчи Чăнлă районĕнчи Аслă Нагаткино шкулĕнче 7-мĕш класра вĕренекен Софья Алеевăна** çуралнă кун ячĕпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, пысăк телей, чăн-чăн юрату, пур ĕçре те ăнăçу тата нумай-нумай ыррине сунатпăр. Вăл пуртан класра та çутăрах, чунра та ăшăрах. Тантăшăмăра питĕ-питĕ юрататпăр!

***Пĕрле вĕренекенĕсем.***

## ÇЫРĂНТАРУ – 2015

Туслă пурăнаççĕ пĕр çемьере çак ачасем. Шкулта та тăрăшса вĕренеççĕ, ытти ĕçре те хастар. Хальхинче вара вĕсем ялти почтальонкăна тĕл пулнă та хăйсен юратнă хаçат-журналне çитес çулăн пĕрремĕш çурри валли çыраннă.

**«Тавтапуç, атте! Тавтапуç, анне!**
**Юратса пире ӳстернишĕн!**
**Тавтапуç, атте! Тавтапуç, анне!**
**«Тантăш», «Тетте», «Самант» çырăннишĕн»,** –

савăнăçа ниçта шăнăçтараймасăр киле васкать виçĕ пĕртăван. Килтисем те кăмăллă: вĕсен ачисем хăйсен чи юратнă кăларăмĕсене çитес çул та юратса вулĕç.

Эй, атьсемĕр! Телей валеçнĕ чух çывăрса ан юлăр! «Тантăш», «Тетте», «Самант» çырăнтарнă чух почтальонпа тĕл пулăр. Килтисене хăвăр юратнă кăларăмсене çырăнса пама ыйтăр! Аслисем сирĕн кăмăлăра хуçмаççех! Çапах та эсир вĕсен ачи-пăчи, мăнукĕсем-çке.

## КĔСКЕН

# Телей кайăкĕ



Çĕр çинчи чи хисеплĕ кайăксенчен пĕри – аист. Вăл пĕчĕк пепке илсе килни, çемье шанчăкĕ пулни çинчен пур халăх та калать. Ăна халалланă сăвă-юрă, халап, илемлĕ ӳкерчĕк те питĕ нумай. Итлемен ачана аист ашшĕ-амăшне хăйĕн сăмсипе çĕклесе пырса панă, ырă шăпăрлансене вара çурăмĕ çинче ярăнтарса илсе çитернĕ.

Комсомольски районĕнче кĕçĕнрех ӳсĕмри ачасене валли «Çут çанталăк тĕлĕнтермĕшĕпе пуян» конкурс йĕркеленĕ. Комсомольски 2-мĕш вăтам шкулĕнчи 3 «б» класра вĕренекен Анастасия Галзанова унта хăй ăсталанă «телей кайăкĕпе» хутшăннă. Ăна вăл хур тĕкĕсенчен, çунатсенчен пуçтарнă. Телей кайăкĕн çурăмĕ çинче йăва та пур. Ку ахальтен мар çапла. Аист çурт тăрринче йăва çавăрчĕ пулсан кунта малашне телей хуçаланĕ. Ылтăн алăллă Настя кашни çурт тăррине кайăк йăва çавăрнине курасшăн. Кашни килте телей хуçаланасса кĕтет вăл. Телей кайăкĕ çынсене тăнăç пурнăç парнелессине ĕненет. Ун чухне çĕр çинче вăрçă та пулмĕччĕ, куççуль те юхмĕччĕ.

***Л. АЛЕКСЕЕВА.***

Комсомольски районĕ,
Комсомольски 2-мĕш шкулĕ.

# Манăн пĕчĕк тусăм

Пĕррехинче кукамай лавккана кайма тухнă та çул хĕррине пĕчĕк кушак çури макăрса ларнине курнă. Лешĕ те ăна асăрханă, тӳрех чупса пынă, пулăшу ыйтнăн куçран тинкернĕ.

Кукамай кушак çурине хĕрхеннĕ, киле илсе килнĕ. Мана курсан пĕчĕкскер чупса пычĕ. Эпĕ ăна сĕт ĕçтертĕм. Мĕнле чĕнесси пирки шухăшларăмăр, унтан иксĕмĕр те килĕшсе Маша ят патăмăр.

Халĕ Маша пирĕн килте савăнса пурăнать. Эпĕ шкултан таврăнасса чăтăмсăр кĕтсе илет те тӳрех ман пата йăпшăнса пырать. Тĕлĕнмелли вара акă мĕн: эпĕ урок тума ларсанах вăл манăн портфеле кĕрсе ларать. Ахăртнех, дневникри паллăсене тĕрĕслет. Эпĕ урок туса пĕтермесĕр те манăн портфельтен тухмасть.

Кукамая пĕчĕк тусăмшăн тав тăватăп.

***Софья ГРИГОРЬЕВА,***
***2-мĕш класс.***

Шупашкар районĕ,
Ишек шкулĕ.




Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çуртĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çуртĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
В.В.ТУРКАЙ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Н.ЦАРЫГИНА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1266 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 4227
Пичете чӳк уйăхĕн 5-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Пĕр ĕмĕтпе ҫунатланакансем

**Этем пин-пин ҫул каяллах уҫă тӳпе айĕнчен хӳтлĕхе куҫнă, хăйне тата ҫемйине валли пурăнмалли вырăн тума пуҫланă. Тахҫан ҫынсем чул хăвăлĕсенче е ҫĕр пӳртсенче, ҫавăн пекех йывăҫ ҫинчи «пӳртсенче» пурăннă. Хальхи ҫуртсем мĕнлерех чаплă вĕт-ха. Строитель алли асамлă тейĕн.**

**Ҫак ачасене пĕр шухăш ҫывăхлатать – вĕсем пурте строитель пулма ĕмĕтленеҫҫĕ. Кашниех ашшĕнчен тĕслĕх илсе унăн ҫулĕпе утасшăн, халăхшăн пархатарлă ĕҫ тăвасшăн.**



## «Аттерен тĕслĕх илетĕп»

Маттурсенчен пĕри Данил Чернов пиллĕкмĕш класра ҫеҫ вĕренет-ха. Ҫапах вăл пӳрт те тунă, йывăҫ та лартнă... Хальлĕхе ку макет кăна-ха, ҫур парта йышăнаканскер. Ҫапах тăрăшса вĕренсен, ĕмĕте сывхартма вăй-хала шеллемесен пĕчĕк «пӳрт» пысăккине ҫаврăнĕ. Ҫакна питĕ ĕненет арҫын ача, ҫавăнпа ăсталăхне кунран-кун аталантарма тăрăшать.

– Манăн атте – строитель. Эпĕ вăл ĕҫленине тимлĕ сăнатăп, хăшне-пĕрне ас туса юлатăп. Ҫак «пӳрте» тунă чухне те унран вĕренни пулăшрĕ ҫав, – каласа парать Данил.

Пӳртне ҫеҫ мар, картишне те тунă-ха вăл. Акă чăххисем курăк чĕпĕтсе ҫӳреҫҫĕ. Вĕсене ҫамрăк маҫтăр йĕкелтен ăсталанă. Йывăҫĕсем те епле илĕртӳллĕн курăнаҫҫĕ.

Унсăр пуҫне Данил ытти япаласене те ăсталама юратать. Нумаях пулмасть хăмаран ҫапкаласа пĕчĕк прицеп тунă, ăна халĕ пĕрремĕш класра вĕренекен шăллĕ Ваня алăран вĕҫертмест.

Ашшĕ пекех йĕлтĕрпе чупма юратать Данил. Ҫывăх ҫынсенчен ырă тĕслĕх илни пурнăҫра самаях усă кӳрĕ.

## Чи хакли – пурнăҫ

Данилăн тантăшĕ Вася Белов та юлташĕпе пĕр шухăшлă пулнине палăртрĕ. Унăн та пысăк ҫуртсем туса ҫынсене савăнтарас килет. Шухăш вĕҫевне ирĕке ярса темĕн тĕрлĕ кермен те ăсталама пулать-ҫке.

Вася строитель пулма шантарчĕ пулсан кун пирки иккĕленмелли ҫук. Мĕншĕн тесен вăл панă сăмаха яланах тытать. Акă пĕррехинче лупашка умне ҫитсе тухсан юлташĕсемпе тавлашу пуҫарса янă. Арҫын ача каланине курах лешĕсем ăна сикеймест тенĕ. Вася вара хăраса тăман, лупашкана шампăлт! тунă. Ҫапла вăл тавлашура ҫĕнтернĕ.

– Ай-ай, кун пек эсĕ тарăн ҫăла ҫеҫ ан сик-ха, – терĕм арҫын ачана тĕллĕннине пытараймасăр.

– Ҫу-ук, малтан эпĕ апла туни мĕн патне илсе ҫитерме пултарни ҫинчен шухăшлатăп, – пуҫне сулкаларĕ Вася. – Лупашка вара пысăк хăрушлăх кăларса тăратмасть. Эпĕ: «Сикеетĕп», – терĕм те хам пустуй калаҫманнине кăтартса патăм.

Питĕ харсăр-ҫке вăл. Нимĕнле йывăрлăх умĕнче те чарăнмасть. Пĕр ĕҫрен те хăрамасть. Аппăшĕнчен Катьăран пĕчĕк кукăльсем, пицца, шарлотка пĕҫерме тата салат тума вĕреннĕ. Килтисене тутлă ҫимĕҫпе савăнтарма яланах хавас.



«Пурнăҫра саншăн чи хакли мĕн?» – тесе ыйтсан: «Пурнăҫ», – тесе хуравларĕ вăл. Эппин, Вася пурнăҫăн чăн-чăн пахалăхне ăнланать.

## «Ҫĕр нихăҫан та ан пĕттĕрччĕ!»

Ҫиччĕмĕш класри Женя Васильевшăн та строитель ĕҫĕ пурнăҫра пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать. Этемлĕхе кирлĕ професси-ҫке ку. Ҫынна ырă тăвасси вара Женьăшăн пĕрремĕш вырăнта. Ҫакна хĕллехи сивĕре пулса иртнĕ пĕр пулăм та ҫирĕплетет.

Женя юлташĕсемпе пĕве хĕрне кайнă. Ăнсăртран тусĕсенчен пĕри Вася шыва кĕрсе ӳкнĕ те пулăшу ыйтса кăшкăрнă. Женьăна чĕннĕ. Арҫын ача шартах сикнĕ, выляса ларнă ҫĕртен юлташне пулăшма чупнă. Акă Вася пăрлă шыва ансах кайнă. Женьăпа Ваня кун пек чухне мĕн тумаллине вăхăтра ăнкарса илнĕ, ăна пур пĕрех туртса кăларнă, килне ăсатнă. Питĕ хăрушă пулăм ҫинчен никама та каламан вĕсем.

Ҫĕр ҫинче тăнăҫлăх пултăр тесен мĕн тумалла-ши? Ҫак ыйту Женьăна та канăҫ памасть. Унăн шухăшĕпе, кашни ачан ашшĕ-амăшне итлемелле, арҫын ачасен вара ҫара кайса командирсен вĕрентĕвĕсене ăса хывмалла. Ун пек чухне тĕнчере йĕрке хуҫаланĕ.

– Ҫак илемлĕ Ҫĕр нихăҫан та ан пĕттĕрччĕ. Ҫавăнпа та чĕр чунсене, ӳсен-тăрана хӳтĕлесчĕ, – тет маттур арҫын ача.

*Лариса ПЕТРОВА.*

Муркаш районĕ,
Шетмĕпуҫ шкулĕ.



# Сывлăха упрамалла!



– «Тантăш» хаҫата тепĕр хутчен вуласа тухасчĕ. Ирĕк паратăр-ши?" – тесе ыйтать шкул вулавăшне кашни килмессерен саккăрмĕш класри Надя Федорова. Вара сĕтел хушшине вырнаҫса ларать те хаҫатăн кашни страницине тĕплĕн паллашма тытăнать. Уйрăмах шкул ачисен заметкисене кăсăкланса вулать вăл.

Надя хитре ӳкерет. Унăн ĕҫĕсенчи сăнарсем – ҫын тата чĕр чун. Алла хутпа кăранташ тытсан вăл ӳнер тĕнчин авăрне путать тейĕн.

– Кăҫал Тутарстан Республикине кайса куртăм. Манăн анне Бугульмара ҫуралнă, ҫавăнпа тахҫанах унта ҫитес ĕмĕтлĕччĕ. Ку хула Шупашкартан пысăкрах. Эпир унта кантăмăр, бассейнра шыва кĕтĕмĕр. Эпĕ ишме питĕ юрататăп, – хавасланса каласа пачĕ хĕр ача.

Надя маттур хĕр ача пулни тӳрех сисĕнет. Вăл тăрăшса вĕренет ҫеҫ мар. Сутă ĕмĕтпе те пурăнать: медицина ĕҫченĕ пуласшăн. Мĕншĕн тесен ырă кăмăллăскерĕн ҫынсене тĕрлĕ чир-чĕртен сыватас килет. Хальлĕхе вара сыватмăшра ĕҫлекен инкĕшĕсене сăнать те вĕсем пек пулма тăрăшать.

– Сывлăха упрамалла, харпăр гигиенине пăхăнмалла. Спортпа та туслă пулмалла, – ҫапларах канаш парать Надя «Тантăш» тусĕсене.

*Виктория МАЙОРОВА.*

Красноармейски районĕ,
Мăн Шетмĕ шкулĕ.

**Ҫĕр ҫырлине татмăттăм – ҫиес килни пĕтерет. «Тантăш», «Тетте», «Самант» ҫырăнмăттăм – вулас килни пĕтерет...**

МАЛ ĔМĔТЛĔСКЕР



# «Йĕкехӳресенчен те хăрамастăп»

Кашни ача тĕрлĕрен пулать вĕт-ха. Пĕри лăпкă, шăв-шава ытлах кăмăлламанскер, урамра выляччен пӳлĕмре кĕнеке вуласа ларать, тепри вара лара-тăра пĕлмест, пур çĕрте те ăна курма, унăн янравлă сассине илтме пулать. Шăп çакăн пек ачасен йышне кĕрет те ĕнтĕ Муркаш районĕнчи Шетмĕпуç шкулĕнче вĕренекен Настя Петрова.

Пиллĕкмĕш класра çеç пулсан та тем те пĕлет, хăйĕнпе калаçакана самантрах кăсăклантарса ярать. Тавракурăмне яланах аталантарма тăрăшаканскер кĕнеке нумай вулать. «Тантăш» тусĕсене те çапла тума сĕнет вăл. Ара, кĕнекепе туслă çын нихăçан та сăмах шыраса кивçене каймасть-çке. Настьăн юратнă авторĕсенчен пĕри – Александр Сергеевич Пушкин. Унăн пур сăвви-юмахне те килĕштерет вăл. Уйрăмах «У лукоморья дуб зеленый» сăвă кăмăлне кайнă. Ăслă кушак тата Людмила сăнарĕсем вара нихăçан та манăçмĕç.

Халапри чĕрчунсене çеç мар, килĕнчисене те юратать Настя. Кролик, йытă тата кушак çурисемпе выляма вăл яланах хавас. Шкултан килсенех çемçе тусĕсене аллине тытса ачашлать. Тĕлĕнмелле те, анчах Настя йĕкехӳресенчен те хăрамасть. Унăн та тахçан çак чĕрчун пулнă.

– Вăл ман алăсем тăрăх, сурăм çинче чупатчĕ, – каласа парать хĕрача юратнă йĕкехӳрине аса илнĕ май. – Кушаксенчен вара пĕчĕкскер питĕ хăратчĕ, пĕр кĕтесе йăпшăнса ларатчĕ.

Тепри йӳкехӳрене тĕл пулсан шари çухăрса тасча çити чупĕ ахăртнех. Настя вара хăюлăхĕпе класĕнчи арçын ачасене те тепĕр чух тĕлĕнтерет. Ахальтен мар вăл стюардесса пулма ĕмĕтленет. Пурте самолетпа темиçе пин çӳллĕшĕнче лăпкăн кăна вĕçсе çӳреме пултараймаççĕ-çке-ха. Настьăна çӳл тӳпе ачаранах илĕртнĕ-мĕн. Иккĕмĕш сыпăкри пиччĕшĕ те ав Мускавра пилот пулма хатĕрленет, тăрăшса вĕренет. Тен, вĕсем кайран пĕр самолетпах вĕçсе çӳрĕç-и? Тата унта ĕçлекенсен таçти инçетри çĕршыва та çитсе курма май пур. Ку та Настьăна илĕртет.

Çунатлă ĕмĕчĕ пурнăçлантăр тесен шкулта лайăх вĕренмеллине аван пĕлет вăл. Çавăнпа тăрăшса вĕренет, пĕрремĕш класранах отличниксен йышĕнче. Математика предметне кăмăллаканскер тĕрлĕ задача шутлама юратать. Вĕсен тупсăмĕсене пĕр-икĕ минутрах тупаять. Пĕр вырăнта нумай ларма хăнăхман хĕрача шкулти тĕрлĕ кружока çӳрет. Пĕр кружокра вăл йывăç хăмана тĕрлĕ эрешпе илемлетме вĕренет, тепринче сăвă-калав çырма хăнăхать.

– Кружоксенче нумай çĕннине пĕлме май пурри мана питĕ савăнтарать, – тет Настя хăпартланса.

Районти кружока çӳрекенсен конкурсне те хутшăнмасăр чăтайман вăл. Сцена çинче мода кăтартса, юрă юрласа, сăвă каласа, ыйтусене тĕрĕс хуравласа тӳресемпе куракансене тĕлĕнтернĕ. Пĕрремĕш вырăна тивĕçсен вара унăн кусĕсем савăнăçпа тулнă. Ăна «Çутталăк кружковецĕ» медаль панă. Настя куншăн питĕ хĕпĕртенĕ.

– Малашне те тĕрлĕ конкурсра хутшăнас кăмăллă-ха эпĕ, – пĕлтерет вăл. – Хама пур çĕрте те тĕрĕслесе пăхас килет.

Çаврăнăçуллă та правурскер ташлама ăста пулни пачах тĕлĕнтермерĕ. Çак ăсталăха вăл килĕнче хăй тĕллĕнех вĕренет иккен. Хавaслă юрă-кĕвĕ ярса тĕрлĕ хускану тăвать. Уявсенче сывăх çыннисене пултарулăхĕпе савăнтарать.

– Эсĕ ташă кружокне çӳретĕн пуль-ха? – тесе ыйтаççĕ унран час-часах. Илемлĕ ташланине кура çапла калаççĕ ĕнтĕ вĕсем. Настя вара хирĕç йăл кулать çеç.

Ĕмĕчĕ-тĕллевĕсем те нумай унăн. Вĕсенчен пĕри автомашинăпа çӳреме вĕренесси. Çавăнпа Настя часрах ӳссе çитĕнес тет. Руль умĕнче ларса пырасси ним чухлĕ те шиклентермест ăна.

– Машинăна çӳретме пĕлни пурнăçа чылай çăмăллатать-çке, – тет Настя. – Хулана кайсан аттепе анне патне те час-час килсе çӳреме май пулĕ. Юлташсене те хавaспах ярăнтарăп, – кăмăллăн кулать вăл.

Тусĕсемпе хутшăнма та яланах хавас маттурскер. Çынран ютшăнмасть. Класс умĕнче пĕр-пĕр хайлав сыпăкне вулама, сăвă пăхмасăр калама пĕрре те вăтанмасть. Çак ен малашне те ăна пулăшса пырĕ тесе шухăшлать Настя. Мĕншĕн тесен пурнăçра тĕрлĕ лару-тăру пулать-çке, хăш-пĕр чухне вара вăтанни, пăлханни чăрмантарать çеç.

Настьăн чун киленĕçĕ çинчен те ыйтса пĕлес терĕм. Вăл пахчара тĕрлĕ çимĕç акса çитĕнтерме юратать иккен. Пĕлтĕр хĕвелçаврăнăш, пăрса, редис тата чечексем лартнă вăл.

– Кăçал аннепе арпус акрăмăр. Вăрисем лайăх шăтрĕç, тăтăшах шăвартăм ăна. Çум курăкран тасатрăм, – каласа парать Настя. – Эх, çимĕçĕ епле тутлă пулчĕ, хăй пĕчĕк пулсан та пылакчĕ. Тепĕр çул тата нумайрах лартмалла пуль-ха, – пайларĕ вăл хăй шухăшне.

Хăюллă та хастар хĕрача «Тантăш» вулаканĕсене те пĕлӳ патне ăнтăлма, тавра курăма анлăлатма тата нумай вулама сĕнет.

*Нина ЦАРЫГИНА.*

ПИРĔН ПУЛТАРУЛĂХ

## Поезд сасси

Юнашар ялта пирĕн тăван пурчĕ. Ăна



Укçине аппа тесе чĕнетчĕç. Вăл ватăччĕ. Качча кайман пирки пĕччене нушаланса пурăнатчĕ. Анне ăна хĕрхенетчĕ, ун патне тăтăшах çӳретчĕ. Çĕрулми лартма, пуçтарма, вутă хатĕрлеме пулăшатчĕ, çĕнĕ çурт çĕкленĕ чухне те айккинче юлмарĕ.

Укçине аппа пирĕн пата килсен питĕ савăнаттăмăр. Вăл яланах мăйăр тата кăмпа илсе килетчĕ. Анне тӳрех мунча хутса яратчĕ.

Çулла. Шăрăх çанталăк. Анне ĕçрен таврăнчĕ те:

– Хĕрĕм, атя-ха Укçине аппа патне вĕтĕ çĕрулми илме каятпăр, – терĕ.

Эпĕ килĕшрĕм. Акă çула тухрăмăр. Инçе каймалла. Анне мана хĕрхенсе урапи çине лартса туртса та пăхрĕ. Каç пуличчен ĕлкĕрес тесе васкарĕ вăл. Çавăнпа часах çитрĕмĕр.

Укçине аппа пире хавaслă кăмăлпа кĕтсе илчĕ. Анне те ун валли кучченеçне хĕрхенмесĕрех илсе тухнăччĕ. Акă михĕсене çĕрулми тултартăмăр та урапа çине вырнаçтартăмăр. Каялла таврăнма тухрăмăр. Анне пĕтĕм вăйĕпе нуша урапине туртса пычĕ. Эпĕ, ултă çулти хĕрача, хыçалтан тĕкнĕ пек тукаласа пытăм.

Икĕ ял хушшинче чугун çул тăсăлса выртатчĕ. Каçма юранă вырăна çитрĕмĕр те унталла-кунталла пăхрăмăр – нимĕн те çывхармасть. Çул варрине çитсен сасартăк пĕр кустăрми тухса ӳкрĕ, урапа тайăлса кайрĕ, михĕсем чугун çул çине йăтăнса анчĕç. Анне хăраса кайрĕ, турра кĕлтурĕ, михĕсене сĕтĕрме тытăнчĕ.

Çав вăхăтра поезд сасси илтĕнчĕ. Асăрхаттаракан паллă пулчĕ ку. Юлашки михе туртса илсен пирĕн умра пысăк кустăрмасем курăнса кайрĕç.

– Мухтав турра! – терĕ те анне макăрса ячĕ.

Эпĕ те куççуле чараймарăм, ĕсĕклеме тытăнтăм.

– Ан макăр, ĕлкĕртĕмĕр-çке, – мана лăплантарма васкарĕ анне.

Кустăрмине вырнаçтарса лартсан вăл михĕсене çĕклесе хучĕ. Унтан мана çапла ăнлантарчĕ:

– Эпир çула пушатса ĕлкĕреймесен поезд тӳнсе кайма пултарĕччĕ, ларса пыракан çыннисем аманĕччĕç, мана вара айăплĕччĕç.

Эпĕ аннене питĕ хĕрхентĕм. Анчах нимĕнле ăшă сăмах каласа та йăпатма пĕлеймерĕм.

Унтанпа нумай-нумай çул иртрĕ. Çапах та поезд сассине илтсен халĕ те манăн чун хумханать, çав хăрушă самантa аса илетĕп.

Юратнă аннеçĕм! Атте ирех, вăхăтсăр чирлесе вилнишĕн эсĕ пĕччен нумай асаплантăн. Мухтав сана, хаклă аннеçĕм!

## Мыскара

Урамĕпех кĕтӳ саркаланса пырать, выльăхсем килĕсене васкаççĕ. Ултă çулти Марине хитре кĕпине тăхăнчĕ те сĕт илме тесе бидон йăтса Анна аппа патне утрĕ. Анна аппа ăна яланах ыр кăмăллăн кĕтсе илетчĕ, анчах паян алăк уçса кĕртекен пулмарĕ.

Маринене курсан пысăк мăйракаллă ĕне Лисук ун патне утрĕ, «Му-у-у», – тесе хыттăн янăраттарчĕ. Хĕрача хăранипе хăвăртрах пӳрте кĕме васкарĕ. «Анна аппа!» – кăшкăрчĕ вăл. Пӳлĕмре никам та курăнмарĕ.

Сасартăк кравать айĕнчен темĕнле «çăмламас кĕлетке» йăраланса тухни курăнчĕ, хăй вара ĕне пекех мĕкĕрсе ячĕ. «Анне!» – çухăрчĕ Марине, алăкне хупса хăвармасăрах урама вĕçтерсе тухрĕ. Лисук алăк уççине кура пӳрте кĕме хăтланчĕ. Унпа туслă пурăнакан сурăхсем те хыççăн тĕпĕртетсе утрĕç. Çенĕкри сак çинче ларакан витрери шыва ĕне кăшт çеç хăварчĕ. Сак айĕнчи купăстасене вара сурăхсем кăшлама пикенчĕç.

Анна аппа упăшки, Якку пичче, юлашки вăхăтра эрехпе туслашсах кайнă, çавна пула ăна ĕçрен хăтарнă. Акă Якку пичче кĕрĕк ăшĕнчен пуçне кăларчĕ те çенĕкри икĕ мăйракана курах кайрĕ. «Акă, шуйттансем мана илме килчĕç!» – шухăшларĕ хăйĕн ăшĕнче. Хăй вара салтак пек хăвăрт сиксе тăчĕ те уçă чӳрече патне васкарĕ, сак çине пусса пахчаналла чăмрĕ. Хытă çапăннăран çамки çине пысăк мăкăль тухса ларчĕ. Ыратнине тӳсеймесĕр ылайчен ахлатрĕ арçын.

Выльăхсене тĕттĕм те тăвăр пӳлĕмре килĕшмерĕ, вĕсем картише тухрĕç. Аллине патак тытнă Якку пичче пӳрте чӳречерен кĕчĕ. Сĕтел хушшине вырнаçса ларсан тарăн шухăша путрĕ.

Анна аппа кӳршĕри Улькка аппа патне каçнăччĕ. Вырсарникун пасара пĕрле каяс пирки калаçса татăлчĕ, сывпуллашрĕ те килне васкарĕ. Пӳрте кĕрсен тĕлĕнсе кайрĕ, тӳрех упăшкине кăшкăрчĕ: «Эсĕ мĕн алăксене уçса хунă?!» Якку пичче унăн сăмахĕсене тăнламарĕ, хăйĕн инкеке пĕлтерме васкарĕ: «Пĕтрĕм, Анна! Мана илсе кайма мăйракаллă шуйттансем килнĕ, вĕсенчен аран хăтăлтăм». Арăмĕ ăна ăнланма тăрăшмарĕ. «Çавă кирлĕ сана!» – терĕ çеç. Кӳреннĕ арçын чăлана тухса выртрĕ.

Килне пушă бидонпа чупса çитнĕ Марине тӳрех амăшне евитлеме васкарĕ: «Анне, эпĕ текех сĕт патне каймастăп, унта мана питĕ хăратрĕç!» Амăшĕ хĕрне тимлĕ итлерĕ те: «Ну, ку тискер чĕрчуна хам та кайса курам-ха», – терĕ. Анна аппа патне çитсен вăл алăк умĕнче кĕрĕк вырт-нине асăрхарĕ. Кӳршĕ хĕрарăмĕ хăнана тӳрех сĕтел хушшине лартрĕ. Вĕсем нумай калаçрĕç, мĕн пулса иртнине ăнланма тăрăшрĕç. Чей ĕçнĕ хыççăн Татьян аппа тулли бидонпа алăк патне кула-кула васкарĕ.

*Галина ПЕТРОВА.*

Тантăш
45 №, 2014, ноябрь, 6



# Кăмакара кукăль пиçет çавна кĕтсе ларатăп эпĕ



Чăпăл-чăпăл чăп!
Кам шăпăрт лармасть,
Ун хăлхине пĕтĕрес!

Ĕнер ирех кӳршĕ ялтан мăнакка пирĕн пата килчĕ. Ывăлĕ темиçе кунлăха Шупашкара кайнă тет, кинĕпе мăнукĕсем те Хусана чаплă уява вĕçтернĕ-мĕн эрнелĕхе.

– Чĕкеç, ара, Лисука ман пата ярсам. Пĕччен каçсерен шикленетĕп. Çитменнине халĕ тавралăх час тĕттĕмленет. Картишре пăру пысăкăш йытă пулсан хăрамăттăм та. Эх, çитес кунсенче пасара çитсе ăратлă йытă çури туянатăпах, – терĕ вăл тенкел çине вырнаçнă май.

Мана унăн сăмахĕсем мĕн тери савăнтарчĕç! Ара, Таиç аппапа кайсан маншăн ырлăх пуçланать-çке.

– Лисук, ак çакна çисем, кăна та тутанса пăхсам, – тесе турилккери мĕн пур тутлине ман еннелле тăсать.

Эпĕ нимĕнрен те шикленместĕп! Хăравçă мулкач мар вĕт хăшĕ-пĕри пек!

Анне мăн аккана хирĕçлемерĕ. Апатлансан тумлантăмăр та çула тухрăмăр. Шурă юр тăрăх савăнса утрăмăр иккĕн. Шăкăл-шăкăл калаçса вĕсем патне çитнине сиссе те юлаймарăм. Çитрĕмĕр те, мăнакка каллех ăшталанма тытăнчĕ. Кăмакаран тутлă пӳрт тулли ырă шăршă сарнă шаркку кăларса сĕтел çине лартрĕ. Холодильникрен шăрттан кăларса касса хучĕ, кăлпасси, канфет-пĕремĕк кăларма та ӳркенмерĕ. Шкапри халва, сухари те ман ума пырса выртрĕç.

– Атя, килти пек пул, вăтанса ан лар, – тесе шаркку турилккине ман умах куçарса лартрĕ.

– Чăвашсене эп хам куртăм:
Вĕсем апат çиеççĕ,
Ак çапла, ак çапла,
Вĕсем апат çиеççĕ, – терĕ вăл та аллине кашăк тытса.

Ух! Пур чăваш та çакăн пек апатланать-и? Кашни кун шăрттан та ас тивет-ши вара? Пирĕн, нумай ачаллă çемьен, унашкалах чаплă çиесси пулаймасть ахăртнех. Эх, мăнакка патĕнче, тулăх сĕтел хушшинче мĕн тери аван! Пурăнасчĕ хăнара тата пĕр уйăх...



Тух, тух, тухăран,
Тухнаттарса мĕн ларан?
Кăмакара кукăль пиçет,
Çавна кĕтсе эп тăрап.



Шур чăланта шур часси –
Миçе сехет çитнĕ-ши?



Тăп-тăр çу Тайрухха,
Тăп-тăр çу Майрухха.
Тайруххапа Майрухха
Иккĕн пĕрле пĕр тăван.
Тарук Ванюка юратать,
Майрук Петюка юратать.

*Элиза ВАЛАНС хатĕрленĕ.*

**Тăван, сире юратнипе мĕн тăвам-ши? Умри саппуна хăюласа парнелем-ши?**
**Тăван, сире юратнипе мĕн тăвам-ши? «Тантăш», «Тетте», «Самант» çырăнса парам-ши?**

● АННЕНЕ ПУЛĂШАТĂП

## Тăпăрчăран хатĕрленĕ булка

**Çимĕç валли 250 грамм çемçе тăпăрчă, 2 çăмарта, 5 кашăк сахăр, пĕр чĕптĕм тăвар, 10 грамм (çур апат кашăкĕ) чустана кăпăшлантаракан порошок (разрыхлитель), 250 грамм çăнăх, 1-2 кашăк сĕт кирлĕ.**

Тăпăрчăна, çăмартана, сахăра тата тăвара пăтратăр. Алапа алланă çăнăхпа кăпăшлантаракан хутăша хушса çемçе чуста çăрăр.

Тимĕр ывăса ятарлă хут сарăр та çу сĕрĕр. Чустана йĕпе аласемпе пайласа 10-12 çаврашка туса ывăса хурăр. 190 градуса çити хĕртнĕ духовкăна 12-15 минутлăха лартăр. Хыççăн булкăсене кăларса сĕтпе сĕрĕр, çиелтен сахăр сапăр та духовкăра тата 3-5 минут тытăр.

## Çĕр улмипе тата соуспа хатĕрленĕ котлет



**Ку çимĕçе янтăлама 400 грамм аш арманĕпе авăртнă какай, сухан, ыхра, сĕтпе йĕпетнĕ батон, тăвар, пăрăç илмелле.**

Какая вĕтетнĕ суханпа, ыхрапа, тăварпа, батонпа тата пăрăçпа пăтратмалла. Темиçе пая пайласа çаврашкасем тумалла та çăнăхпа йăваламалла. Çу сĕрнĕ формăна хĕррипе хумалла. Варрине çурмалла каснă çĕрулмине вырнаçтармалла, тип çупа сĕрмелле. Тĕрлĕ специ сапма та юрать.

220 градуса çити хĕртнĕ духовкăна лартса 15 минут тытмалла.

Çав вăхăтра соус хатĕрлемелле. 3 апат кашăкĕ хăймана пĕр кашăк кетчуппа,120 миллилитр шывпа, тăварпа тата пăрăçпа хутăштармалла. Пулнă хатĕре формăна ямалла. Духовкăна лартса тата çур сехет тытмалла.

## Тăпăрчă десерчĕ

**30 грамм желатин, 250 миллилитр сĕт, 700 грамм тăпăрчă, 250 грамм хăйма, 200 грамм сахăр, иçĕм çырли е урăх улма-çырла кирлĕ.**

Желатин янă савăта сĕт хушăр та 1 сехет тытăр. Тăпăрчăна, хăймана тата сахăра лайăх пăтратăр. Улма-çырлана ваклăр.

Вăхăт иртсен желатин янă савăта çулăм çине лартса ăшăтăр. Анчах вĕреме кĕриччен ан тытăр. Çулăма сӳнтерĕр. Унтан пĕтĕмпех хутăштарса савăта ярăр та 4-5 сехетлĕхе сивĕтмĕше лартăр.

## «Chocolate miracle» торт

**Ку торт валли 1 стакан çăнăх, çавăн чухлех йӳçĕтнĕ сĕт, сахăр, çур чей кашăкĕ апат соди, 2 апат кашăкĕ какао кирлĕ. Крем валли 400 миллилитр хăйма, стаканăн иккĕ виççĕмĕш пайĕ чухлĕ сахăр илĕр.**

Малтан йӳçĕтнĕ сĕтпе сахăра, унтан алланă çăнăха, апат содипе какао хушса лайăх лăкăр.

Чустана формăна ярăр та 200 градус таран хĕртнĕ духовкăна лартса 30 минут пĕçерĕр.

Хатĕр коржа çурмалла касăр.

Халĕ крем хатĕрлĕр. Хăймапа сахăра лайăх лăкăр та коржсене сĕрĕр. Торта вĕтетнĕ шăккалатпа илемлетсе сивĕтмĕше лартăр. 2 сехет тытăр. Апачĕ тутлă пултăр!

● ТЕСТ

## Эсĕ... Интроверт е экстраверт?



Ыйтусене «Çапла» (1 балл) е «Çук» (0 балл) тесе хуравламалла.

1. Эсĕ тăтăшах вăйлă туйăмсен авăрне лекме, çак пулăма вăрах вăхăта астуса юлма ăнтăлатăн-и?
2. Сана яланах ăнланакан, пулăшакан, лăплантарма пĕлекен юлташсем çумра пулни кирлĕ.
3. Эсĕ хăвна хуйхă-суйхăсăр çын тесе шутлатăн-и?
4. Шухăшласа хунинчен пăрăнма йывăр-и сана?
5. Мĕнле те пулин ĕç пирки вăрах, тĕплĕн шухăшлатăн-и? Çиччĕ виççе пĕрре касатăн-и?
6. Панă сăмахна, вăл нимĕнле усă кӳмесен те, çилпе вĕçтерместĕн-и?
7. Санăн кăмăл-туйăму час-час улшăнать-и?
8. Эсĕ ĕçлеме те, калаçма та правур-и?
9. Пĕр сăлтавсăрах тунсăх пусни, хăвна телейсĕр туйни пулнă-и?
10. Кампа та пулин тавлашсан тем тума та хатĕр-и?
11. Хăвна килĕшекен каччăпа е хĕрпе паллашма вăтанатăн-и?
12. Çилленнĕ вăхăтра эсĕ тем тума та пултаратăн.
13. Самантлăх туйăм хыççăн кайса час-часах ăссăрла утăмсем тăватăн-и?
14. Хăв унччен мĕн калани е мĕн туни çинчен кашнинчех ӳкĕнсе шухăшлатăн-и?
15. Çынсемпе тĕл пулас вырăнне эсĕ кĕнеке вулама кăмăллатăн.
16. Сана çăмăллăнах çиллентерме, кулянтарма пулать-и?
17. Шавлă ушкăнпа вăхăт иртterме юрататăн-и?
18. Хăш-пĕр шухăшна эсĕ никама та каламастăн. Тĕрĕс-и?
19. Хăш чухне тем тума та хатĕр пек вăй-халлă, тепĕр чухне вара ним сăлтавсăрах ывăннине туятăн.
20. Çĕнĕ çынсемпе паллашма юратмастăн. Темиçе çывăх юлташ пулни те сана тивĕçтерет.
21. Эсĕ нумай ĕмĕтленетĕн-и?
22. Кам та пулин санпа калаçнă чухне сассине хăпартсан эсĕ те хирĕç кăшкăрăн-и?
23. Хăвăн пур çирĕпленнĕ йăлуна та лайăххисен шутне кĕртетĕн-и?
24. Хăвна тăтăшах такам умĕнче айăплăн туятăн.
25. Хăш чухне ним çинчен те шухăшламасăр выляма-кулма пултаратăн-и?
26. Санăн нерв тытăмĕ йĕркеллĕ-и? Мĕнле шухăшлатăн?
27. Эсĕ хаваслă та вăр-вар çын-и?
28. Пĕр-пĕр ĕçе пурнăçланă хыççăн ун çинчен тахçанччен шухăшлатăн. Тепĕр хут çав ĕçех тунă пулсан мĕн те пулин улăштараттăнччĕ ахăртнех. Вара вăл лайăхрах та пулĕ. Çапла-и?
29. Пысăк ушкăнпа пулнă чухне хăвна канăçсăр туятăн.
30. Камран та пулин мĕн те пулин илтнине тепĕр çынна каласа паратăн-и?

**Пĕтĕмлетӳ**

***0 балран пуçласа 10 çити.*** Эсĕ интроверт. Чĕмсĕр, ыттисемпе хутшăнма юратмастăн. Хăвăн шухăшлавупа çеç пурăнатăн.

***15 балран пуçласа 24 çити.*** Эсĕ экстраверт. Çынсемпе хутшăнма, калаçма юрататăн. Ютшăнмастăн. Çĕннине пĕлме ăнтăлатăн.

***11 балран пуçласа 14 çити.*** Эсĕ амбиверт. Хăвна кирлĕ чухне кăна çав çынпа калаçатăн. Пустуй сăмах вакламастăн.

● СЫВЛĂХ ТАТА ИЛЕМ

## Усăллă витаминсем




Сывлăха çирĕплетме тĕрлĕ витаминпа пуян апат çимелле. Вĕсем организмра çителĕксĕр пулсан çын чирлеме пултарать. Е пĕр-пĕр витамин çитмесен çӳç тăкăнать, чĕрнесем хуçăлаççĕ. Çакă ӳте те пысăк витĕм кӳрет. Кирлĕ витамин çитменрен вăл ытла çулланать е типсе кушăрханать.

Ӳт сывлăхĕпе илемлĕхĕшĕн А, В, С, Д тата Е витаминсем яваплă. Вĕсенче ӳте тутлăхлатакан япала, антиоксидант нумай. Уйрăмах Е тата С витаминсем çав веществосемпе пуян.

Кашни витамин ӳте мĕнле витĕм кӳнине пăхса тухар-ха.

Ӳт илемĕ тата сывви организмра А витамин çителĕклĕ пулнинчен килет. Ӳт ытла типнине, хытнине асăрхарăр-и? Апла çăмарта, сĕт-çу, кишĕр, ӳпке-пĕвер, брокколи купăста ытларах çийĕр.

**В** ушкăнри витаминсем ӳте çителĕклĕн нӳрлетеççĕ. Вĕсем пите сĕрмелли кашни кремрах пур. Усă курма ан ӳркенĕр çеç.

Пĕчĕк сурансене ӳт илме, ытлашши пĕркеленчĕксенчен хătарма **С** витамин пулăшать. Хĕвелĕн ультрафиолет пайăркисенчен те вăлах сыхлать. Питĕ лайăх антиоксидантсен шутне кĕрет.

**Д** витамин хĕвелпе хĕртĕннĕ хыççăн ытлашши пигмент пăнчисем тухасран пулăшать. Анчах хĕвел çинче ытла нумай пулни ӳте сиен кӳме пултарнине яланах асра тытăр.

**Е** витамин хытăрах, типĕ ӳте нӳрĕклетет, çемçетет. **В** витамин пекех унпа косметологире анлăн усă кураççĕ. Вăл чылай кремра пур.

К витамин куç айĕнчи тĕттĕм ӳте çутатать. Сиенленнĕ юн тымарĕсене, капиллярсене йĕркене кĕртме пулăшать.

Çавна май ку е вăл витамин организмра сахалтарах пулнине ӳт тăрăх асăрхама май пур. Хамăра тимлĕрех пăхни çеç кирлĕ.

# Викăпа Валерия шкула кайма хатĕрленеççĕ



Виктория тата Валерия Митрофановăсем – çав тери туслăскерсем. Килес çул шкула кайма хатĕрленекен хĕрачасем сас паллисене пĕлеççĕ, çырма та тĕшмĕртеççĕ. Тепĕр чухне алла шурă хутпа ручка илсе хăйсен ячĕсене тăрмашса чĕркелеççĕ.

– Пирĕн иксĕмĕрĕн çав тери хитре ятсем, уншăн аттене тав тумалла. Эпир çуралсанах канăçлăхне çухатнă вăл. Пире валли тăрăшсах ят ширанă. Кайран тупнă. Паллах ăна анне те пулăшнă, – терĕç хĕр ачасем хавхаланса.

Пĕчĕкскерсем хатĕрленӳ класне çÿреççĕ.

– Унта пире анне вĕрентет. Шел, вăл вăхăтра хамăра килти пек ирĕклĕ тытаймастпăр. Тунсăхланă вăхăтра чупса пырса ăна ыталаса илейместпĕр. Ирĕк памасть. «Шкулта эпĕ сирĕншĕн Алина Витальевна, килте – анне, çакна нихăçан та ан манăр», – терĕ. Пĕчĕккĕн хăнăхса пыратпăр-ха, – мăнаçланчĕ Валерия пĕр вырăнта сиккелесе.

Пушă вăхăтра урамра уçăлса çÿреме юратаççĕ йĕкĕрешсем. Акă унчен сарăхĕрлĕ çулçăсем чылай пуçтарнăччĕ вĕсем. Çĕр çинче çÿрекен хурт-кăпшанкăпа кăсăкланатчĕç. Алла патак илсе пĕшкĕнсе ларатчĕç те типнĕ курăка сирсе унта мĕн пуррине тинкеретчĕç.

– Халĕ çĕр шăнчĕ. Урамра та сивĕрех. Юр тата ытларах ÿксен йĕлтĕрпе, çунашкапа ярăнма васкăпăр. Тепĕр чухне пичче çумне çулăхăпăр. Ан тив, вăл çунашкапа иртнĕ çулхи пекех туртса çÿретĕр. Пире иксĕмĕре ярăнтарма йывăртарах-ха ăна. Пултăрах, вăл пирĕн пичче вĕт! – çатăлтатрĕç пĕчĕкскерсем пĕр-пĕрне пÿлсех.

Пĕр тăвансен савăнăçĕ виçесĕр. Вĕсем ашшĕ-амăшĕ, аппăшĕпе пиччĕшĕ пуртан çав тери телейлĕ.

# Снежанăпа Диана – вăлта ăстисем

Çак шкултах 5-мĕш класра ăс пухакан Снежанăпа Диана Меркурьевăсем сăвă çырма кăмăллаççĕ. Тем çинчен те шăрçалаççĕ вĕсем. Иккĕшĕ сĕтел хушшине вырнаçсан ăмăрту пуçланать вара: хăшĕ чуна пырса тивмеллерех хайлать?

– Иксĕмĕр те маттур эпир! Пĕрне ырласа теприне хурлаймăн, – йăл кулса пуплет Диана.

Хĕрачасем яланах пĕрле. Пÿртре пĕри урай сĕрнĕ вăхăтра тепри апат пĕçерет е ытти ĕçе пурнăçлать.

– Эпир питĕ пăрça яшки юрататпăр, çавăнпа ăна хамăрах лартса çитĕнтеретпĕр. Ытти пахча çимĕç ÿстерессинчен те шикленместпĕр. Хамăршăн тăрăшатпăр вĕт, такам валли мар. Е тепĕр тесен пилĕк авмасăрах сĕтел çине çăкăр, çĕрулми килсе выртмасть-çке, – мăнаçланаççĕ мĕн пĕчĕкрен ĕç çумне çыпçăннă Меркурьевăсем.

Çуллахи кунсене пĕтĕм кăмăлтан аса илме юратаççĕ хастар Дианăпа Снежана.

– Кĕтÿре те питĕ аван çÿреттĕмĕр. Килте лариччен уçă сывлăшра лайăхрах. Выльăхсем чипер тăнă чухне симĕс курăк çинче йăваланаттăмăр, канаттăмăр, алхасаттăмăр. Хĕвел питтинче пĕрре мар ÿт-пĕве писĕхтернĕ. Çарран чупнă чухне пыл хурчĕсем ураран сăхни те пулнă. Пĕрех çут çанталăк ытамĕнче пулма мĕн тери ырăччĕ! Сарă, кăвак, шурă лĕпĕшсене хăваласа тытаттăмăр та каялла вĕçтерсе яраттăмăр. Эй, мĕн тери хаваслăччĕ! – иртнĕ каникула хавассăн аса илчĕç Меркурьевăсем.



Пулă тесен вара каçсах каяççĕ йĕкĕрешсем. Ăна çиме кăна мар, тытма та ăста вĕсем.

Малтансенче çынсем вăлта йăтса пĕве хĕрринелле васканине ăмсанса пăхнă пĕр тăвансем.

– Шел, вăлта çук. Пулнă тăк эпир те вĕсенчен юлман пулăттăмăр, киле витри-витрипе карас йăтăттăмăр, – ассăн сывласа калаçнă Снежана кантăк витĕр урамалла пăхнă май.

Диана чылайччен шухăша путса ларнă хыççăн ура çине ялтах сиксе тăнă та савăнăçлăн кăшкăрса янă.

– Ним кулянмалли те çук кунта! Хамăрах ăсталăпăр хамăра мĕн кирлине! – тенĕ хавхаланса.

Снежана ним ăнланмасăр ун çине тĕлĕнсе пăхнă.

– Ара, вăлта тăвасси йывăр ĕç-им? Вăрмана каятпăр та кирлĕ йывăç вуллине шыраса тупатпăр. Унран питĕ шеп япала пулĕ те, – тенĕ çаплипех хăпартланса.

Калана тунă, тепĕр куннех шĕшкĕ вулли касса шуратнă та ун çумне вăлта çиппи çирĕплетнĕ. Унтан иккĕшĕ те ăмăртмалла пĕве хĕрринелле чупнă. Чăн та, пĕрремĕш кунхинех тем чухлĕ пулă тытнă вĕсем! Пĕр тăвансем вĕсене хăйсемех тасатнă, çатмара ăшаланă.

Çапла пушă вăхăт тупăнсан, тÿрех вăлта йăтса шыв еннелле васкать йĕкĕрешсем. Хăйне евĕр чир, пулă тытасси, пуçланнă вĕсен.

– Шел, халĕ унашкал иленÿпе киленеймĕстпĕр. Çĕр çеç мар, шыв та шурă кавирпе витĕнчĕ, – теççĕ Меркурьевăсем.

Вăрнар районĕ,
Мăн Явăш шкулĕ.

# Çутçанталăк ытамĕнче пулма юратакан Андрейпа Алексей



Андрейпа Алексей Ивановсем çиччĕмĕш класра пĕлÿ илеççĕ. Иккĕшĕ те физкультура урокĕсемшĕн каçса каяççĕ.

– Кунĕпех, апат çинчен манса, мечĕк хăвалама хатĕр эпир. Халĕ вара урамра юр çуни пушшех чуна хавхалантарать. Çак куна эпир тахçанах кĕтнĕ. Мĕншĕн тетĕр-и? Акă кĕçех хоккей лаптăкне шăнтса йĕркене кĕртĕпĕр. Тус-семпе çав вырăнтан татăлма та пĕлмĕпĕр-ха, – теççĕ йĕкĕрешсем хавхаланса.

– Эпĕ Лешăран пилĕк минут маларах çуралнă, çавăнпа унăн пиччĕшĕ шутланатăп. Çураласса та эпир çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланиччен маларах, çурла уйăхĕн 30-мĕшĕнче, çут тĕнчене килнĕ. Пĕрпеклĕхсем нумай пирĕнте. Спорта юратнисĕр пуçне çут çанталăк ытамĕнче пулма кăмăллатпăр. Кунта пирĕн юнашарах вăрман. Çуллалăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те çав йывăçсене пăхса киленнисĕр пуçне унта уçăлса çÿретпĕр. Çулла, кĕркунне çырла-кăмпа пуçтаратпăр. Хĕлле йĕлме-йĕлтĕрпе çитсе килетпĕр, – теççĕ пĕр-пĕрне пÿлсе Ивановсем. – Аслисем каласа панă тăрăх ĕлĕкрех çак вăрмантан çын татăлма пĕлмен. Мăйăр юратакансем хутаç илсе час-час шĕшкĕлĕхе васканă. Йĕкел пуçтаракан та пулнă. Ăна сысна тавраш лайăх çинĕ иккен. Çулçă та шăлнă. Выльăх валли. Айне те сарнă, çитернĕ те. Хăрăк-турата та кăмака хутма йăтнă. Унтанпа пурнăç улшăннă. Халĕ çулçă шăлакан та, хăрăк-турат пуçтаракан та çукпа пĕрех. Ара, выльăх усракан сахал, пÿртсем те халĕ газпа ăшăнаççĕ.

Пысăк ĕмĕтсемпе пурăнаççĕ арçын ачасем. Шкултан хăвăртрах вĕренсе тухса юратнă професси алла илесшĕн.

– Пысăк укça ĕçлесе илсе юратнă çыннăмсене парнесемпе хавхалантарас килет. Питĕ, – терĕç мал ĕмĕтлĕскерсем.

Йĕпреç районĕ,
Пучинке.

Степан МИХАЙЛОВ

# СӐНМИ ЮРАТУ е ПУХВИРĔН КУЛАС КИЛЕТ

**(3 пайлă, 5 курăнуллă пьеса-юмах)**

**(Малалли. Пуçламăшĕ 42-44-мĕш номерсенче).**

ИЛЮК. Эх, Савтепи! Эсĕ-и ку? Санпа хирĕç тăрса калаçма тĕл килчĕ-ши? *(Савтепи умне пырать).* Савтепи! Савтепи, тăна кĕр-ха!

САВТЕПИ *(пуçне çĕклемесĕр).* Ах, турăçăм! Темле этем сасси илтĕнет. Аташма пуçларăм пулас.

ИЛЮК. Савтепи! Ан хăра. Кунта эпĕ – Илюк!

САВТЕПИ *(Илюка курса).* Илюк! Эсĕ-и ку? Ах, чунăм, епле килме пĕлтĕн эсĕ кунта çитиччен?

ИЛЮК. Сана шыраса килтĕм, чунăм. Сана çак асапран хăтарма... Кӳр-ха салтам. *(Савтепине йывăç çумĕнчен салтать).*

*Савтепипе Илюк ыталалашаççĕ.*

САВТЕПИ. Тĕлĕкре-ши ку е аташатăп-ши? Хама хам та ĕненес килмест. Эп сана текех курасса шутламан та. Илюк, тав сана, мана манманшăн.

ИЛЮК. Ăçтан манăп-ши сана, Савтепи? Эс ман чĕрене ача чухнех кĕрсе вырнаçнă та, эп сансăр пĕр кун та канăç тупаймастăп. Сана çухатнăранпа пĕтĕм çĕр чăмăрĕ хам çинче выртнă пек туйăнать.

САВТЕПИ. Анчах мĕнле хăтăлăпăр? Вăл халех кунта мана тимĕр çĕлĕк тăхăнтартма килет. Эс пуррине пĕлсен иксĕмĕре те асаплă вилĕм лекет.

ИЛЮК. Çук, Савтепи! Вăй çитнĕ таран çапăçатпăр, эпĕ ăна ирĕккĕн хам чуна памастăпах.

САВТЕПИ. Эсĕ ăна пурĕпĕр пĕччен çĕнтерес çук. Вăл питĕ тискер те вăйлă. Ну çапах çапăçмасăр ан парăн. Вилсен те иксĕмĕр пĕрле вилетпĕр. Мана халь нимле асаплă вилĕм те хăрушă мар.

ИЛЮК. Эс вилĕм çинчен ан шутла. Пирĕн пурăнас пулать. Эпир иксĕмĕр-çке санпа, чунăм! Иксĕмĕр пĕр-пĕрне юратсан темĕнле тăшмана та çĕнтерĕпĕр.

САВТЕПИ. Мĕнле пулăшма пултарăп-ши эпĕ сана?

ИЛЮК. Çапăçас умĕн эпĕ сана çак кушеле паратăп. Чике-Сухал мана çĕнтерме пуçласан, эп вăйсăрланса çитсен вара: "Чике-Сухалăн кулас килет!" – тесе кăшкăр. Унтан мĕн пулнине хăвах курăн.

САВТЕПИ. Юрĕ. Анчах эсĕ Чике-Сухала, вăл темле тархасласа ыйтсан та, канма ан пар. Вăл кăшт кансанах малтанхи вăйне илет те вара пĕтрĕмĕр.

*Кашкăр кĕрет.*

КАШКĂР. Ме-ха, çак улмана çи. Ку панулми вăй кĕртет. Эпĕ ăна Чике-Сухалăнне вăрласа тухрăм. Ну, хатĕрленĕр! Халех килет! *(Каять).*

ИЛЮК. Тавтапуç, Кашкăр тусăм!

САВТЕПИ. Ку мĕнле Кашкăр? Эпĕ çав тери хăраса ӳкрĕм.

ИЛЮК. Унран ан хăра. Вăл пирĕн чи çывăх тус. Çак Кашкăр мана кунта илсе килчĕ. Унсăрăн эпĕ сана нихăçан та тупас çукчĕ.

САВТЕПИ. Ав, кашлани илтĕнет. Пытан хăвăртрах, Чике-Сухал килет. Ас ту, эп каламасăр ан курăн.

ИЛЮК. Эх, Савтепи... Пĕрле пурăнма Турри çырнă пулсан, çĕнтеретпĕр тăшмана. Урăхла пӳрнĕ пулсан – ĕмерлĕхе сывă пул! *(Пытанать).*

ЧИКЕ-СУХАЛ *(хашкаса кĕрсе).* Фу! Фу-у! Этем шăрши кĕрет... Кам пур кунта?

САВТЕПИ. Эп кăна кунта... Этем шăрши манран кĕрет пуль...

ЧИКЕ-СУХАЛ. Санран мар-ха ку. Кала хăвăртрах кам пур кунта? Унсăрăн хам



шырама тытăнатăп! *(Шырать).* Фу! Фу-у-у!..

САВТЕПИ. Хамах калатăп, анчах ăна ан тив. Ман тăван пичче пирĕн пата хăнана килнĕ. Курăнма санран хăрать.

ЧИКЕ-СУХАЛ. Малтан курам-ха. Унтан тивмеллипе тивмелле маррине куç курĕ.

САВТЕПИ. Тух, Илюк! Куртăр ĕнтĕ.

ИЛЮК *(курăнса).* Эпĕ килтĕм хăнана.

ЧИКЕ-СУХАЛ. Хăнана! Кам пулатăн-ха эсĕ?

ИЛЮК. Çĕршыв ывăлĕ – Илюк.

ЧИКЕ-СУХАЛ. Хм... Ырă шухăшпа килнĕ пулсан нихăçан никам курми хăна тăватăп. Усал шухăшпа килнĕ пулсан вара санран йĕпе вырăн та юлмĕ.

ИЛЮК. Эпĕ çакăнта çитиччен ырă шухăшпа килмен, санпа çапăçма килнĕ.

ЧИКЕ-СУХАЛ. Ха-ха-ха!.. Манпа çапăçма! Ну, эпĕ питĕ хавас. Сан пек "паттăра" яланах "ырă сунса кĕтетĕп". Унсăрăн мана пурăнма та кичем. Ха-ха-ха... Аван, питĕ аван. Анчах мĕнпе çапăçăпăр? Хĕçпе е алăпа?

ИЛЮК. Маншăн пулсан пурпĕрех.

ЧИКЕ-СУХАЛ. Апла пулсан кунтах çапăçăпăр. Алса тăхăнса килем-ха. Унсăрăн ман ал çумне этем юнĕ çыпăçсан, хама хам çиес килекен пулать. *(Каять).*

САВТЕПИ. Ах, чунăм сиксе тухать... Кашкăр панă панулмие çирĕн-и?

ИЛЮК. Йывăç хыçĕнче чухнех çирĕм. Çисе ярсанах хама хам тытса çĕклессĕнех пулчĕ. Вĕриленсе кайрăм, ал-ура тимĕр пек хытса çирĕпленсе ларчĕ. Çав чул сăрта тепĕр май çавăрса лартассăн туйăнать.

САВТЕПИ. Питĕ хăратăп-çке. Эпĕ кун пек çапăçу курман.

ИЛЮК. Ан хăра, Савтепи. Хăракана яланах çĕнтереççĕ. Кам хăрамасть – ăна хурçă та илмест. Акă, тыт ман япаласене. Эпĕ каланине ан ман.

*Чике-Сухал кĕрет. Вăл чавси таран хура алса тăхăнса лартнă.*

ЧИКЕ-СУХАЛ. Ну, ман пулчĕ.

ИЛЮК. Эпĕ вара тахçанах хатĕр.

ЧИКЕ-СУХАЛ. Кам малтан çапать?

ИЛЮК. Пирĕн халăх нихăçан та малтан çапмасть. Эс çап!..

ЧИКЕ-СУХАЛ. Ха-ха-ха!Эп малтан çапсан, мана кайран кам çапать?

ИЛЮК. Эпĕ.

ЧИКЕ-СУХАЛ. Ха-ха-ха! Эп çапнă хыççăн санран шăмă татăкĕ те юлмасть вĕт.

ИЛЮК. Курăпăр, камран мĕн юлĕ.

ЧИКЕ-СУХАЛ. Ну, юрĕ. *(Илюка çапать).*

ИЛЮК (ывтăнса кайнă хыççăн тăрса). Начар çапатăн. Пирĕн ак çапла çапаççĕ! *(Çапать).*

ЧИКЕ-СТАРИК *(инçете ывтăнса).* Ой-ой-ой!.. Эпĕ кун пеккине çуралнăранпа та курманччĕ-ха...

ИЛЮК. Урăх виличчен те кураймастăн!

*Илюкпа Чике-Старик нумай вăхăт çапăçнă хыççăн чарăнаççĕ. Иккĕшĕ те ывăннă.*

ЧИКЕ-СТАРИК. Ой, ывăнса çитрĕм. Канар пуль кăштах...

ИЛЮК. Тимĕре хĕрсе çитсен туптаççĕ! *(Чике-Сухала çапать).*

ЧИКЕ-СТАРИК. Ой, чур! Мана – чур! Эп канмасăр урăх çапăçмастăп.

ИЛЮК. Ман вăй кĕрсе те çитмен, эсĕ канасшăн. Çапăçнăçемĕн манăн вăй хутшăнса пырать! *(Çапать ).*

ЧИКЕ-СУХАЛ (урăх тăраймасăр). Ой, тăраймастăп! Урăх ан çап! парăнатăп сана! Ан çап, тархасшăн!

ИЛЮК. Э-э, парăнтăн-и? Тăр уру çине!

ЧИКЕ-СТАРИК. Хĕрхен мана, парăнăскерне, ан вĕлер... Кăшт канам-ха. *(Выртать).*

ИЛЮК. Ну, юрĕ. Пирĕн енче выртакана çапмаççĕ. Парăннă çынна тыткăна кăна илеççĕ.

САВТЕПИ. Ах, Илюк! Пĕтетпĕр, ан кантар!..

ИЛЮК. Савтепи! Ман кутамккара вĕрен пур. Пар-ха кунта! Эп ăна çыхса пăрахатăп.

САВТЕПИ. Ăна тимĕр сăнчăрпа çыхас пулать, унсăрăн пире пĕтерет вăл.

*Савтепи вĕрен парсан Илюк Чике-Старике çыхма тăрать. Сасартăк Чике-Сухал сиксе тăрать те Илюка çапса ӳкерет, пусса выртса пăвма пуçлать.*

ЧИКЕ-СУХАЛ. Э-э, лекрĕн-и? Ак сана! Мана мĕнле çыхмаллине вĕрентем...Эсĕ мана тыткăна илме шутларăн-и? Хăвна халь пăвса вĕлерег, çисе ярап!

САВТЕПИ. Ах, Илюк! Каларăм-çке, ан кантар ăна, терĕм. Ах, пĕтрĕмĕр...

ИЛЮК *(пăвăнчăклă сасăпа).* Куш...кушел...кул-кул...

САВТЕПИ. Ах, чунăм! Эп мансах кайнă. Кушел, Чике-Сухалăн кулас килет!

ЧИКЕ-СУХАЛ. Э-э-э, пĕтрĕн-и? Ак сана! *(Сасартăк сиккелеме пуçлать, каçса кайса кулать).* Ой, мĕн пулчĕ ку? Ха-ха-ха! Чарăнăр! Вĕлеретĕр! Ой-ой!.. *(Сывлăшсăр пулса йăванса каять, лăпланать).*

САВТЕПИ *(Илюк кăкăрĕ çине выртса йĕрсе).* Ах, чунăм, Илюкăм...Вĕлерсех пăрахрĕ-и вăл сана? Ах, чунăм... Мана çăлас тесе хăвăн вилме лекрĕ-шим?..

ИЛЮК. Сан куççулĕ ман кăкăра кăвар пек çунтарса илчĕ. Савтепи, шыв...Шыв пар-ха.

САВТЕПИ. Юрĕ, Илюкăм, халех! *(Тухса каять).*

ИЛЮК. Юратнă çыннăн куççулĕ те сиплĕ. Кăкăр çине пĕр тумлам тумласанах чун кĕчĕ.

САВТЕПИ *(шыв ăсса кĕрсе).* Ме, ĕç-ха. Тен, вăй кĕрĕ.

ИЛЮК. Тавтапуç, Савтепи. Ку çĕнтерӳре эсĕ те нумай пулăшрăн.

САВТЕПИ. Эпĕ хăранипе кушел çинчен...

ИЛЮК. Ну, шыв ĕçрĕм те вăй кĕрсе кайрĕ. *(Ури çине тăрать).* Ăçта-ши пирĕн Кашкăр?

*Йывăç хыçĕнчен çамрăк Каччă тухать.*

КАЧЧĂ. Эпĕ кунта. Эсир мана паллаймастăр пулас. Эпĕ ку – Кашкăр.

ИЛЮК. Эсĕ Кашкăррине курмастăп. Сан пек Кашкăршăн хĕрсем çапăçса пĕтĕç.

КАЧЧĂ. Чике-Сухал чунĕ тухнă хыççăн, эпĕ хамăн ĕлĕкхи сăна кĕтĕм. *(Илюка алă парать).* Çĕнтерӳпе саламлатăп сире. Халĕ эпир пурте ирĕкре.

ИЛЮК. Чике-Сухал патĕнче тыткăнра асапланса пурăнакансене пурне те ирĕке ярас пулать.

КАЧЧĂ. Çапла, мĕн чухлĕ куççуль юхтарнă вăл хура халăхăнне.

ИЛЮК. Малашне, тек иртĕхеймĕ ĕнтĕ. Часах çĕрсе кайĕ.

САВТЕПИ. Ирĕке кăларнă çынсем мĕн тери тав тăвĕç сана...

ИЛЮК. Мана-и? Эпĕ пĕччен мар вĕт. Эпир пĕтĕм халăх вăйĕпе çĕнтертĕмĕр çак тăшмана. Халăха тав тăвас пулать. Анчах ăçта хурăпăр-ха кăна?

КАЧЧĂ. Ав çав чул айне хурса хăварас.

ИЛЮК. Ман сухалне касса илесчĕ-ха, кирлĕ пулĕ. *(Сухалне касса илет).*

*Чике-Сухала пысăк чулпа витсе хураççĕ.*

САВТЕПИ. Ну, каяр пулĕ кермене.

ИЛЮК. Кайăпăр. Кăштах канар та çуралнă çĕршывалла çул тытăпăр. Анчах кам илсе кайĕ-ха унта пире? Кунта Кашкăр илсе килнĕччĕ. Халь Кашкăр çук-çке пирĕн...

КАЧЧĂ. Хам илсе килнĕ, хамах илсе каятăп. Эп Кашкăр пулма та пултаратăп. Тухатма та пĕлетĕп. Анчах этеме сиен кӳме мар, усă тума юрататăп. Çавăнпа мана Чике-сухал кураймастчĕ.

ИЛЮК. Каятăн-и пирĕнпе пирĕн çĕршыва? Мĕн тери савăнса пурăнăпăр пĕрле.

КАЧЧĂ. Эсир йышăнатăр пулсан, эпĕ хавас...

ИЛЮК. Ну, кайрăмăр. Анчах малтан кермене кайса пĕтĕм халăха ирĕке кăларатпăр. Пĕтĕм халăх пĕрле савăнса хăй ирĕкĕпе пурăнтăр.

*Ыталашса тухса каяççĕ.*

***(Малалли çитес номерте).***

**Чаршав.**

# 44-мĕш полкри трубач

В. МАРКОВ



**(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте.)**

### «Курайманлăх çĕнтерчĕ çав туйăма...»

Тухăç фронтне çитсен Володя курайманлăх туйăмĕ тепĕр хут хĕрсе пынине туйрĕ. Лешĕсем вара каллех тапăнма пуçларĕç. Фортрисем сахалланса юлнине, çар хатĕрĕсенчен чылайăшĕ стена айĕнче путланнине, красноармеецсем кашни патронне тата кашни гранатине перекетленине пĕлеççĕ вĕсем. Çавăнпа шикленмесĕр, васкамасăр тапăнса пыраççĕ.

Красноармеецсем вара шăпăртах. Володя та пемест, пĕр офицерне пăшалпа тĕллерĕ пулин те.

Нимĕçсем çывăхарах та çывăхарах пыраççĕ. Анчах мĕншĕн команда çук? Мĕншĕн никам та пемест? Тепĕр минутранах нимĕçсем вĕсен умĕнчех пулаççĕ вĕт!..

Сасартăк кĕскен:

– Çулăм! – янăрарĕ.

Володя хăйĕн карабинĕн сассине илтмерĕ, вăл пулеметсемпе автоматсен кĕрлевĕпе хутăшрĕ. Гитлеровецсем



тăкăнма пуçларĕç. Красноармеецсен çулăмĕ чарăнмарĕ-ха. Тăшмана форта çитме памалла мар. Унсăрăн тытăçу пуçлансан çавăн чухлĕ гитлеровеца çĕнеймĕн.

Темиçе кун каяллахи пек нимĕçсем каллех чакма тытăнчĕç. Володя çăмăллăн сывласа ячĕ. Пуçне çавăрчĕ те çамрăках мар, мăйăхлă пулеметчика курчĕ. Лешĕ пилоткипе питне шăлнă май ун çине пăхать.

– Ăçтан тупăнтăн эсĕ? – ыйтрĕ вăл.

– Эпĕ госпитальте пултăм, унта пулăшрăм. Икĕ сехетлĕх ячĕç мана.

– Хăрушă-и? – чеен кулса ыйтрĕ пулеметчик.

– Çук пулас, – терĕ Володя.

– Мана та хăрушă мар, – хальхинче кулас шухăшсăрах каларĕ пулеметчик. – Курайманлăх çĕнтерчĕ çав туйăма...

Сасартăк вăл унччен мĕн калаçнине те манса кайрĕ тейĕн:

– Шыв илсе килсемччĕ, ывăлăм, салтаксем типсе вилеççĕ. Фашистран кая мар чуна илет вĕт.

### Шыв илсе килмелле!

Шыв илсе килмелле! Калама çăмăл. Анчах ăçтан тупмалла-ха ăна? Госпитальте те йывăр аманнисене пĕрер стакан çеç параççĕ... Тухтăрсемпе санитарсем пачах ĕçмеççĕ тесен те юрать. Йăлтах фашистсене пула. Бомба сирпĕтме тытăннă кун вĕсем шыв пăрăхне аркатрĕç. Мухавеца е Буга çитесси çинчен, уйрăмах кăнтăрла, ан та шухăшла. Йĕри-таврах переççĕ.

Харсăррисем çĕрлесерен Мухавеца çӳренине пĕлет-ха Володя. Эппин, вăл та пултараять.

– Тĕттĕмленсенех сире валли шыв илсе килĕп, – сăмах пачĕ вăл.

Утă уйăхĕнче часах тĕттĕмленмест. Хĕвел те тахçанах пытанчĕ пек, пур пĕрех çутă-ха, аванах курăнать. Унта та кунта прожекторсем çутатни, çулăм хыпса илни ĕçе татах йывăрлатать. Мухавец çыранне çитме ансат мар.

Володя чылайччен пытанса, кĕтсе выртрĕ. Акă прожекторăн янкăр çути çырана шуса çитрĕ, шыв çине анчĕ, каялла çаврăнчĕ. Сӳнчĕ. Унтан каллех çав йĕркепех çаврăнма тытăнчĕ.

Володя çав кĕске вăхăтсемпе усă курма шухăш тытрĕ. Вунă-вун икĕ утăм тăвать те пытанса выртать. Анчах пĕчĕк флягăсем çеç ан сутчăр, вун икĕ савăт вĕт! Чăнкăртатма пултарĕç...

Ку лайăх шухăш пулчĕ. Шыв патне Володя асăрхамалла мар чупса çитрĕ. Шыва сăмси çеç курăнмалла кĕрсе выртрĕ, флягăсене пĕрин хыççăн теприне тултарчĕ. Ăнăçушăн савăннăскер каялла таврăннă чухне тимлĕхне çухатрĕ. Пытанмалли вырăна çитиччен вун пилĕк-çирĕм утăм юлсан ун çинче сасартăк прожектор çути чарăнчĕ. Володя çĕр çине выртса ĕлкĕрчĕ çеç, автомат шатăртаттарса ячĕ, çывăхрах пĕрин хыççăн тепри вичĕ мина сирпĕнчĕ.

Арçын ача ни вилĕ, ни чĕрĕ выртать. Хăлхинче янăрать, пуçĕ çурăлса тухас пек ыратать, темшĕн урисем те итлесшĕн мар. Çĕклenme хăтланчĕ те тăнне çухатрĕ. Питне такам нӳрĕ алăпа сĕртĕннĕрен вăранса кайрĕ.

«Нимĕçсем!» – вĕçсе иртрĕ хăрушă шухăш. Володя чупса тарасшăнччĕ.

– Вырт, ан хускал. Хамăрăн. Шăваятăн-и? – терĕ такам.

– Тăрăшăп.

Акă вĕсем иккĕн – малта салтак, ун хыççăн Володя – крепость патне шума тытăнчĕç...

### Епле вĕсем туслă, пĕртăвансем пек...

Çур сехетрен арçын ача Тухăç фортне çитрĕ. Тул çутăлса пырать. Шăп. Хутранситрен çеç пăшал пени е пулемет кĕскен шатăртаттарни илтĕнет. Пулеметчика шыраса тупсан Володя ăна фляга тăсса пачĕ.

– Акă, ĕçĕр...

Пулеметчик ăна чи хаклă пурлăх пек асăрхануллăн тытрĕ те тути патне илсе пычĕ, куçне хупса темиçе сыпкăм ĕçрĕ.

– Ух епле! – çуркаланнă тути телейлĕ кулăпа илемленчĕ. – Ну, халĕ нумайччен чăтăп-ха. Асăрхан, нимĕç чĕппи! – пысăк та хыткан чăмăрĕпе тăшман енне пăхса юнарĕ.

– Эсир ĕçĕр, татах ĕçĕр, – хистерĕ Володя.

– Тавах, ывăлăм. Чĕрӳ ырă санăн, – терĕ пулеметчик. – Анчах пĕлетĕн-и, пирĕн çынсен çапларах каларăш пур: «Пĕччен хуть вăкăр çи – мухтава çеç тивĕçĕн, йышпа çисен вара хисеплĕ пулăн». Ытисен те ĕçес килет. Вĕсене кайса пар. Мана вара хальлĕхе çитĕ.

Володя красноармеецсене пĕрин хыççăн теприне шывпа савăнтарчĕ. Кашниех флягăна чĕтрекен аллипе тытать те икĕ-виçĕ сыпкăм ĕçсен каялла тăсать, ыттисене пама ыйтать. Çакна ытарми сăнарĕ арçын ача, пĕчĕк те хĕрӳ чĕри совет çыннисемшĕн мăнаçланчĕ. Акă мĕнле вĕсем – туслă, мухтавлă, пĕртăвансем пек. Пĕри те тĕпне çити ĕçмерĕ. Шыв ĕçес килнипе темĕнле аптăранă пулсан та...

### Тыткăнра

Каялла таврăннă чухне çап-çутахчĕ. Черетлĕ тапăну пуçланать. Тупăсемпе минометсем чарăнми переççĕ, тăшман бомбардировщикĕсем тĕлĕрмеççĕ. Вĕсене хирĕç çулăм кăларнинчен усси çук, çавăнпа форт хӳтĕлевçисем ытлашши хускалмасăр выртрĕç.

Арттапăнупа бомбежка хыççăн Володя пуçне çĕклерĕ те пулеметчик çине асăрханса пăхрĕ. Унăн пичĕ чĕп-чĕр юн.

– Пичче, эсир аманнă! – хăранипе кăшкăрса ячĕ вăл.

– Пĕлетĕп, ывăлăм. Çавăнпа санран пулăшу ыйтатăп. Эпĕ сурана çыхса киличчен пулемет умĕнче пул-ха.

Володя савăнсах килĕшрĕ. Çапла пулмасăр! Унччен вăл фашистсене ахаль карабинран çеç персе курнăччĕ. Халĕ вара унăн аллинче чăн-чăн «максим». Тăшман çывăха пытăр кăна!

Анчах тăшман темшĕн васкамасть. Пилĕк минут каннă хыççăн каллех арттапăну пуçланчĕ. Пĕр снарячĕ пулемет çывăхнех ӳкрĕ. Арçын ача çулăм юпине курчĕ те хăйне таçта вĕçсĕрлĕхе кайнăн туйрĕ...

...Володя йывăр куç хупанкисене аранаран уçрĕ, тӳрех палланă уссиллĕ сăнпите курчĕ, йĕри-тавра пурте çавăн пек сăнлă – хыткан, асаплă. Вĕсем хыççăн шапа тĕслĕ тум тăхăннă фашистсем пыраççĕ.

– Нимĕçсем!

Володя сиксе тăрасшăнччĕ. Анчах ăна такамăн аллисем тытса чарчĕç.

– Выртах, санăн хумханма юрамасть.

Кăна уссиллĕ пулеметчик каларĕ. Вăл арçын ачана çĕклесе пырать.

Каярах, Володя кăштах тӳрленсен, пулеметчик ăна мĕн пулса иртнине каласа пачĕ. Снаряд çурăлнипе çамрăк пулăшуçăн пуçĕ минренĕ. Анчах фашистсем ун патне çитсе пулеметне туртса илме тăрсан арçын ача ăна, мĕн тунине ăнланмасăрах, çатăрласа тытнă, вĕçертесшĕн пулман. Нимĕç ачана штыкĕпе сулса янă. Çак вăхăтра пулеметчик чупса çитсе Володьăна хӳтĕлесе ĕлкĕрнĕ. Çапла вĕсем тата темиçе красноармеец тыткăна çакланнă...

### Ку – çăлăнăç

Темиçе кунтан лагере татах тыткăна лекнисене илсе килчĕç. Вĕсен йышĕнче арçын ача та пур. Володя ун çине пăхрĕ те:

– Петя? Эсĕ-и?! – терĕ малалла туртăнса.

– Володя?!

– Мĕн тума шухăшлатăн?

– Тарма! Эсĕ вара?

– Эпĕ те!

Арçын ачасем çапла калаçса татăлчĕç.

...1943 çул. Аран-аран курăнакан вăрман сукмакĕпе хĕвел тата çăлтăрсем тĕрĕх çул пăхса икĕ имшеркке, çĕтĕк тумлă арçын ача тухăçалла утать. Йывăр. Выçă. Анчах Тăван çĕршыва лекес туртăм пуринчен те вăйлăрах.

Акă вĕсем фашист тыткăнĕнчен те саккăрмĕш, те вуннăмĕш хутчен тараççĕ. Мĕнпе вĕçленĕ-ши ку хальхинче? Каллех тытса каялла илсе кайĕç те асаплантарĕç-ши, вăйлă хĕнесе тарçă пек ĕçлеттерĕç-ши? Çук, фашист тыткăнĕнчи пурнăçран вилĕм аванрах...

Шăппăн, асăрханса утаççĕ арçын ачасем – икĕ пĕчĕк паттăр – вăрман сукмакĕпе. Тухăç енчен вара совет хĕç-пăшалĕн кĕрлевĕ вăйлăран та вăйлăрах илтĕнет.

Ку – çăлăнăç.

***Вырăсларан Лариса ПЕТРОВА куçарнă.***

# Сăвăпа чĕрем юрлать

## Мăркка

Пирĕн килте кушак пур –
Ытарма та çук, маттур.
Çăмламас ун тяпписем,
Пит чее-çке куçĕсем.

Ак илетĕп те çăмха,
Чупкалать вара Мăркка.
Алхасатăп эп унпа –
Вăл вылясшăн-çке манпа.

Эп шкултан килсе çитсен
Вăл ларать мана кĕтсе.
Çаврăнать йĕри-тавра,
Тем кĕтет пулас манран.

Мурка, Мурка, кил кунта,
Манăн пĕчĕкçĕ Мăркка.
Çитересшĕн эп сана –
Пулăн пысăк чăмăркка.

***Максим ГЛИНКИН.***
Шупашкар,
17-мĕш шкул.

## Ылтăн кĕркунне

Кĕркунне, кĕркунне
Çитрĕ чăвашсем патне.
Сарă, хĕрлĕ çулçипе
Савăнтарать çынсене.

Кĕркунне, кĕркунне
Йăпатать этем чунне.
Тĕрлĕ-тĕрлĕ çимĕçпе
Тултарать пӳлмесене.

Ăшă енне кайăксем
Ав васкаççĕ çулĕпе.
Кураксем те шăнкăрчсем
Сыв пуллашрĕç çынсемпе.



*Таня РАКОВА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ӳкерчĕкĕ.*

## Ваттисене юратса

Ваттисем, сире халалласа
Эп çыратăп халĕ çак сăвва.
Сире мухтаса та юратса,
Нумай-нумай ыр кун-çул сунса.

Эсир хисеплĕ, ăшă чунлă,
Ĕçре маттур та пултаруллă.
Хура-шурне нумай-çке курнă,
Чунпа çапах хавасланă юлнă.

Ачăрсем сире юратчăр,
Мăнуксем вара ан манчăр,
Ăшă сăмахсем калаччăр,
Яланах ăш пиллĕ пулччăр.

## Улатакка

Вăрманта таккать-таккать,
Йывăçсене пулăшать,
Хурт-кăпшанкă вăл шырать,
Йывăçа кун-çул парать.

## Тусăм

Вероника – манăн тусăм –
Ăслă, кăмăллă, хитре.
Йăмăк пек вăл, унсăр тунсăх.
Кулă пултăр çеç питре!

## Анне

Аннене эп юрататăп,
Ырлăх-сывлăхне сунатăп.
Чун-чĕререн тав тăватăп,
Çĕре çити пуç таятăп.

Тути кулать, савăнать,
Анне мана юратать.
Лайăх, чипер ман анне.
Эх, упрасчĕ ĕмĕрне.

***Настя РОМАНОВА.***
Муркаш районĕ,
Çатракасси шкулĕ.

## Асатте

Куртăм паян тĕлекре, касхине
Хамăн юратнă асаттене.
Тăратчĕ вăл манăн умра
Шур кĕпепе, хитре çунатпа.

Ыйтрăм унран эп: «Кала, асатте,
Ма питĕ ир эс хăвартăн пире?
Ма нумайччен пурăнмарăн?
Ма пире савăнтармарăн?»

«Хаклă мăнукăм, Турри мĕн хушать...
Вăхăт çитсессĕн çӳле хăпартать.
Эпĕ кĕтменччĕ çав вилĕм кунне –
Ав илсе кайрĕç мана тӳпене.

Маншăн, çапах та, эс пит ан кулян,
Асаннӳне савăнтар кăмăлтан.
Вăл пĕччен, пулăшсамччĕ ăна.
Турă кайран, курăн, çăлĕ хăвна...»

Эпĕ чунтан ыталарăм ăна,
Алă сулса вăл ăсатрĕ мана.
Хам тĕнчене лăпланса акă антăм,
Тепĕр минут иртсенех эп вăрантăм.

***Кристина АНТОНОВА.***
Вăрнар районĕ,
Вăрнар 2-мĕш шкулĕ.

## Телей

Кĕтекенсем телейлĕ теççĕ,
Анчах телей пулмарĕ сан.
Юратакан сăвапла теççĕ,
Юратнă çын килмерĕ сан.

Ăраскална тăшман пĕтерчĕ!
Куççуль тăкаттăн çав ялан.
Инçетелле куçу тинкерчĕ:
«Килет-ши савнă мăшăр ман?»

Сан ачусем аттесĕр ӳсрĕç,
Туймарĕç ашшĕ хӳттине,
Вĕлтрен яшки, мăян та çирĕç,
Крахмал, хывăх пашалăвне.

Тăлăх турат хисепсĕр теççĕ.
Тавах Турра, çĕкленчĕç ав:
Виç пăхаттир, сăнпа – йăлт ашшĕ,
Кĕрнеклĕ те патвар-çке çав.

«Мăнуксене халь ман курасчĕ», –
Шутлаттăн эсĕ яланах.
Халь пӳрт тулли-çке, Турă пачĕ.
Ача-пăча сасси кунтах.

Калатăн: «Эпĕ халь телейлĕ,
Ак ăраскалăм çитрĕ ман.
Вĕсем-çке – пурнăçăн илемĕ...
Ан пултăр вăрçă нихăçан!»

«Ман мăнуксем вăрçа ан курччăр,
Ан илтчĕр вăрçă сассине.
Эп курнă нушана ан туйччăр...» –
Пăшăлтатан хăв илтмелле.

Çӳл тӳпере хĕвел çеç çиçтĕр,
Ун ăшшипе çеç савăнар.
Пур çын телейĕшĕн те миршĕн,
Çак çут тĕнчешĕн кар тăрар!

***Ольга ГОЛОВИНА.***
Елчĕк районĕ,
Кĕçĕн Таяпа.

## Манăн кушак

Пирĕн килте кушак пур –
Çăмĕ çемçе, тытса кур.
Чупма питĕ юратать,
Жаннăран ялан тарать.
Пепке ăна кăмăллать,
Гарфилд тесе йыхăрать,

Хытă-хытă чăмăртать,
Ачашланă май лăпкать.

Пирĕн çак мăр-мăр кушак
Апатне çиесшĕн ак –
Вĕçĕмсĕр хыçран чупать,
Сĕт ярса пама ыйтать.

Хырăмĕ выçса çитсен
Йăлăнать вăл темĕнччен:
«Мяу!» – тесе макăрать,
Хуçинчен апат ыйтать.



*Наташа ХРИСТОФОРОВА (Вăрмар районĕ, Пысăк Енккасси) ӳкерчĕкĕ.*

## Сивĕтет çанталăк

Питĕ сивĕ-çке çанталăк,
Çурĕ çумăрĕ пĕр талăк.
Пĕлĕт хĕвеле пытарчĕ,
Вăштăр-ваштăр çил тапранчĕ.

Çулçă ӳкрĕ çĕр çине,
Çитрĕ ĕнтĕ кĕркунне.
Юр та вĕçтерме пуçларĕ,
Çĕре мамăкпа хупларĕ.

***Жанна ПИГИЛЬЦЕВА.***
Патăрьел районĕ,
Кĕçĕн Арапуç.



*Саша ПАВЛОВ (Канаш районĕ, Йăлмачча) ӳкерчĕкĕ.*

## Кĕрхи сăнсем

Тин çеç-ха ешĕлччĕ вăрман,
Юрлатчĕç кайăксем янравлă.
Паян саралнă яш юман,
Çилпе ката ытла та шавлă.
Тăратăп эпĕ çул çинче,
Пĕр вĕçĕм çулçăсем вĕçеççĕ.
Кикаклатса пуç çийĕнчен
Хур кайăксем çӳлтен иртеççĕ.
«Йĕркеллĕ çитĕр кăнтăра», –
Алă сулса халь ăсататăп.
Çуркуннепе васкавлăрах
Килсе çитме телей сунатăп.
Вăрман паян илемлĕрех
Çуллахинчен. Çакна кам тунĕ?
Пур йывăç тĕсĕ тĕрлĕрен.
Асамлă чăннипех кĕр кунĕ.



*Валя НИКИФОРОВА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ӳкерчĕкĕ.*

## Юлашки салампа

Йывăçсем улăштарчĕç сип-симĕс тумне,
Халь лараççĕ сап-сарă, кĕрен.
Юлашки салампа алă сулнăн пире
Сарă çулçă ӳкет çĕр çине.

Сывлăш усă, тасатнă ăна çумăрсем.
Уй-хирте халь хуçа кĕркунне.
Ĕçсене хăвăртрах пĕтерсчĕ тесе
Тăрăшар, пулăшар пĕр-пĕрне.

Кĕрхи çилĕ çӳрет ырă шăршă сарса,
Тухăçран хăпарать сар хĕвел ташласа,
Шкул енчен эс илтен шăнкărав сассине –
Ачасем çул тытаççĕ пĕлӳ тĕнчине.

***Катя НИКИФОРОВА.***
Вăрмар районĕ,
Кĕтеснер.

## Аслати асăрхаттарăвĕ

Тартăм эпĕ çумăртан,
Чупрĕ çумăр хыçалтан.
Çывăхрах ав ват юман –
Пур-ха çăлăнăçăм ман.

Çитрĕ çумăр васкаса,
Аса-çиçĕм кăларса.
Эх, силлет вăл юмана,
«Тух унтан!» – хистет мана.

Кĕмсĕртетрĕ аслати:
«Эй, итле, этем ачи.
Çиçĕм çиçнĕ вăхăтра,
Йывăçран пул аякра.
Шыв ислетнĕ йывăça
Пултарать çапма аса».

## Пĕрремĕш юр

Пĕрремĕш юр выртать урамра.
Çĕр те шăннă. Салху таврара.
Кайăк-кĕшĕк вĕçет кăнтăра,
Пĕвесем те витĕнчĕç пăрпа.

Шурă юрĕ выртать пур çĕрте,
Вăйлă çил лăпланмасть-çке пĕртте.
Сивĕ хĕл те çитет ерипен,
Шартлама алхасать кунсерен.

Шурă тĕтĕм тухать мăрьерен,
Таврана саланать вăл хуллен.
Систерет çил-тăман тухасса,
Илĕртсе, астарса, йăпатса.

***Ольга СИБИРЯКОВА.***
Етĕрне районĕ,
Чирĕккасси.



*Алексей МАКСИМОВ (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ӳкерчĕкĕ.*

Луиза ВАСИЛЬЕВА калавĕсем

# Туҫук

Ҫунашкана такам шаршан ҫине хăпартса хунă. Аран илтĕм ăна унтан. Алла темле майпа шăрпăк та кĕртме ĕлкĕртĕм.

Ыратнине пăхмасăр ҫырманалла васкарăм. Улька аппасен карти тĕлĕнчен иртсен тĕлĕнмелле ӳкерчĕк куртăм: хурапа шурă тĕслĕ ĕнене икĕ пысăк йыттапăннă.

Хăвăртрах Ваҫҫа пиччесем патне чупрăм.

– Тухăр-ха хăвăртрах! Ҫырмара ĕнене хам-хамсем ҫурса тăкаҫҫĕ ĕнтĕ, – терĕм чӳрече умĕнче кăшкăрса.

– Сирĕн Маруҫăра кӳрентереҫҫĕ-им? – сиксе тухрĕ картишрен фуфайкка тăхăннă Ваҫҫа пичче.

– Ҫук-ха, ĕни такамсен вăл. Палламастăп, – терĕм пăштик-пăштик сывланă май.

– Ҫын выльăхĕшĕн мĕн макăрса ҫӳретĕн тата? Кирлĕ-и вăл сана? Курмăш пул та... Атя, кай килне, – тесе хайхискер калинккене шалт! хупса шалалла лаплаттарса кĕрсе кайрĕ.

Каллех ҫырманалла чупрăм. Йытăсем ҫаплипех ним айăпсăр хăвалаҫҫĕ. Акă хайхискер усалскерсенчен тарса ӳкрĕ те сăрталла хăпарма тытăнчĕ. Анчах юр таран пулнăран путса ларчĕ мĕскĕн. Лешсем вара ун ҫине кашкăрсем пек сиксе ларчĕҫ.

Чĕре тӳсмелле мар ыратрĕ. Пулăшаймастăп-ҫке ĕнене. Ним тăвайман енне йываҫ ҫумĕнчи хăрăк витрене илтĕм те кирпĕч купи ҫине пăрахрăм. Ҫак сасă хăратрĕ-ши йытăсене? Ҫаврăнса пăхмасăр ферма еннелле чуптарчĕҫ хайхискерсем. Ĕнен мăйĕнчен юн сăрхăнать. Суранне кăшт пусарас тесе ҫав вырăна юрпа тытрăм.

– Кăшт тăхта-ха, кама та пулин чĕнсе килем, – тесе ăна ачашларăм та ялалла вĕҫтертĕм.

Ман телее, Улька аппа хăйсен умĕнчех юр хыратчĕ.

– Сирĕн Машкăр ҫырмара аманнă, выртать. Паянхи кун мĕн-ма урама кăларса ятăр? Курăк ҫиме-и? – терĕм хыпăнчăклăн.

Кӳршĕ хĕрарăмĕ кĕреҫине ывăтрĕ те манран малтан чупрĕ. Ăна аран ĕлкĕрсе пытăм.

– Ара, ку Ваҫҫасен ĕни вĕт! Мĕскер пулнă ăна? Кур-ха, суранланнă, – терĕ Улька аппа выльăха тĕсесе пăхнă май.

Пĕр тăхтамасăр Смирновсем патне чупрăм. Кантăкран шаккаса:

– Сирĕн ĕнĕр ҫырмара! Ăна сиплемелле! – терĕм кăшкăрса.

Хапхи чĕриклетсе уҫăлчĕ те Ваҫҫа пичче тухрĕ.

– Ачам, эсĕ каснă лартнă куршанак! Сана паҫăрах ăс парса ятăм-ҫке. Ҫын выльăхĕ мĕн тума кирлĕ сана? Спаҫҫип ятне илтессишĕн ҫапла ăшталанса ҫӳретĕн-им? – терĕ хайхискер кăмăлсăррăн.

– Ĕни сирĕн вăл, – терĕм пĕр утăм хыҫалалла чакса.

– Кам каларĕ?

– Ара, ĕненместĕр пулсан лупас айне кĕрсе пăхсамăр, – ҫине тăтăм ҫаплипех.

Кăмăллăн пирус мăкăрлантарса тăраканскерĕн сасартăк сăнĕ улшăнчĕ.

– Паҫăр апат патăм-ха, анчах ăна асăрхамарăм, тупата. Ара, витере выртать пулĕ тесе шухăшларăм. Акă ĕне йĕрри. Калинккерен тухса кайнă, путсĕр! – терĕ Ваҫҫа пичче ҫухалса кайса.

Туҫука хăваласа килтĕмĕр те ăшă витене хупрăмăр. Ваҫҫа пичче мана тав туса пĕтерейместь. Смирнов пирки халăхра: «Хыт кукар», – тенине пĕрре мар илтнĕ эпĕ. Акă халĕ хайхискер икĕ кĕсьене те мăйăр тултарса пачĕ. Пылак кучченеҫпе те сăйлама манмарĕ.

– Сирĕн ĕнӳ пăруламанччĕ ахăртнех. Акă кĕленче саватпа сĕт парса яратăп, – терĕ Ваҫҫа пичче кăмăллăн.

Килте аннене паянхи ĕҫ-пуҫ ҫинчен каласа патăм та:

– Пĕлтĕр, ас тăватăн-и, эсĕ пыр шыҫнипе вăйлă аптăранăччĕ. Смирновсем патне кайрăм та кăмăла ҫеҫ пĕтерсе таврăнтăм. Пĕр курка сĕт те памарĕҫ тимĕр пăрҫасем. Сана, чирлĕскере, пĕрре те шеллемерĕҫ. Хăв вара паян хайхискерсене ырă ĕҫпе савăнтартăн, – терĕ ҫăм арласа лараканскер.

Анне тĕрĕсех калать-ха, анчах хуҫисемшĕн выльăх айăплă мар-ҫке. Туҫук ирĕклĕ калаҫать, кулать пулсан е никама та пăхăнса тăмасан – ҫавăн чухне маншăн хăйĕн тутлă сĕтне пĕрре те шеллемен пулĕччĕ.

...Юнкун каллех ҫуна илсе ҫырманалла васкарăм. Смирновсен тĕлне ҫитсен тăпах чарăнтăм. Туҫука курас килнĕрен хапха хушăкĕнчен картишелле тинкертĕм. Телей, ĕне ура ҫине тăнă! Авă хурантан шыв ĕҫет.

Кĕсьерен ҫăкăр кăлартăм. Ăна хăналас тесе калинкке еннелле утăмларăм. Шел, алăка шал енчен питĕрнĕ.

– Маттурkka! Ҫу кунĕсенче сана ытларах та ытларах ачашлăп. Хури кăна мар, шурă ҫăкăр та ҫитерĕп, – терĕм сасăпах.



© Ксюша КОШЕЛЕВА (Йĕпреҫ районĕ, Ҫăкалăх) ӳкерчĕкĕ.

# Юратмастăп хĕллене, аванах-ҫке кĕркунне



© Оля ГАВРИЛОВА (Йĕпреҫ районĕ, Ҫăкалăх) ӳкерчĕкĕ.

Хĕл кунĕсене чунтан килĕштеретĕп тесе калаймастăп. Мĕншĕн-ха кĕр хыҫҫăн тӳрех ҫуркунне е ҫулла пулмасть-ши? Е ҫывăрма выртас та пуш уйăхĕн вĕҫĕнче ҫеҫ вăранас...

Хĕллесенче ҫунапа ярăнма юрататăп-ха. Алла йĕлтĕр лексен те кулянмастăп. Уҫă сывлăшра ҫӳрени хăех мĕне тăрать-ҫке! Шкулта та кашни ир спортпа туслă пулмалла тесе тĕрлĕ хускану тутараҫҫĕ.

Юнкун икĕ урок ҫеҫ пулчĕ. Вĕрентекен хăйне япăх туятăп терĕ те... Шкултан ҫиҫĕмле хăвăртлăхпа тухса сирпĕнтĕмĕр. Килте апатланнă хыҫҫăн тимĕр ҫунана сĕтĕрсе ҫырманалла васкарăм. Ленукпа пиччĕшĕ манран маларах ҫитме ĕлкĕрнĕ иккен. Хавассăн сăртран ярăнаҫҫĕ. Кун пек алхассан ҫунине хуҫса пăрахаҫҫĕ-ха. Вĕсен ашшĕ вăрмансă та, ҫунине те йывăҫран ăсталаса панă авă. Мĕнешкел ырлăхра пурăнаҫҫĕ! Картиш тулли вутă Захаровсен, мунчине те эрнере виҫĕ кĕреҫҫĕ.

Пĕррехинче Ленука аппăшĕ тем сăлтавпа пуҫĕнчен кашăкпа ҫапрĕ. Тусăм макăрма мар, ахăлтатса кулма тапратрĕ. Ыраттармарĕ-ши вара? Лайăхрах пăхрăм та – кашăкĕ тимĕртен мар, йывăҫран иккен. Чăн та, ашшĕ вăрманта тăрăшса вăй хуни курăнать ҫав.

Эх, епле аван сăртран ярăнма. Муклашка тĕлне лексен пурте юр ăшне чăматпăр. Унтан тумтире тасатмасăрах тăвалла ăмăртмалла чупатпăр. Юлашкинчен вăйран кайрăмăр. Тулта ҫирĕм тăхăр градус пулин те пире пăчă. Вара виҫсĕмĕр те канас тĕллевпе йăмра сывăхне лартăмăр. Ленук пиччĕшĕ, Сашук, сасартăк кĕсйинчен канфет кăларчĕ. Сăмахсăрах ăна ҫуни ҫине хучĕ. Пирĕн ҫине чеен пăхрĕ, унтан пĕшкĕнсе тутлă кучченеҫе тӳрех сăварне илчĕ.

– Куртăр-и! Эпĕ еплерех пултаруллă! Алăсăрах хыпăма тăрантарма пултаратăп, – терĕ хăпартланса.

Кур-ха эсĕ ăна, Улăп паттăр пек тыткалать хăйне. Вĕҫкĕн. Каснă-лартнă асламăшĕ.

– Шĕпĕнсем, манран тĕслĕх илме пултараймастăр та эсир, – пакăлтатрĕ ҫаплипех пĕр чарăнми.

Унăн сăмахĕсем, паллах, чуна ыраттарчĕҫ. Кур-ха эсĕ ăна, чипер килĕштерсе вылярăмăр, халĕ хирĕҫесшĕн.

– Тепĕр канфетна хур-ха ман тимĕр ҫуна ҫине, – хушрăм сасартăк Сашука тарăхса.

Тĕлĕнмелле пулин те, турткалашмарĕ. Мĕн хушнине сăмахсăрах пурнăҫларĕ. Чĕркуҫлентĕм, пылак ҫимĕҫе ҫăвара илес тенĕ вăхăтра чĕлхе ҫуна ҫине ҫыпҫăнса ларчĕ. Турă хăтартăрах! Мĕнле хăйпăтмалла? Алла та, капла та турткаланса пăхрăм – ыратать! Сашукăн илемлĕ кăвак куҫĕ арбуз пысăкăш чарăлчĕ. Ман тавралла чупкалать-ха хăй, анчах нимпе те пулăшаймасть. Аптăранă енне вăл ҫунана асăрханса ҫӳлелле йăтрĕ, эпĕ те ҫыпҫăннă чĕлхепе ҫӳлелле ҫĕклентĕм.

– Халĕ килелле хуллен пахчапа утăпăр. Ҫитсен мĕн те пулин шухăшласа тупатпăрах, – сăмахларĕ Сашук ниҫта кайса кĕреймесĕр.

Картише кĕрсе тăнă чухне Ленукăн амăшĕ ĕнисене шыв ĕҫтеретчĕ. Манпа инкек пулнине ăнлансан:

– Часрах пӳрте кĕрĕр. Унта Лисук самантрах ҫунаран хăтăлĕ, – васкатрĕ вăл пире.

Ҫенĕк картлашки тăрăх хăпарнă чухне такăнса ӳкрĕм те... чĕлхе ҫуна ҫинчех тăтăлса юлчĕ пулĕ терĕм. Ах, еплерех юн юхать! Ăна ҫăтса ĕлкĕрейместĕп вĕт... Темле тăрăшсан та.

Ах, атте тимĕрҫĕре ĕҫленĕренех тимĕртен ҫуна туса пачĕ ҫав. Лавккаран туяннă пулсан е хайхи вăрманҫăна йывăҫран тутарнă пулсан – паян нимĕн те пулмастчĕ.

Ҫавăн хыҫҫăн ҫынпа калаҫма мар, апат та ҫиейми пултăм. Аппа ялан тăрăхлать.

– Малашне хăвна ярăнтарнăшăн ҫунуна чуптусах тăратăн пулĕ? – тет лĕх-лĕх кулса.

Ку ним те мар-ха, куллен ман умра чăх тукмакĕ ҫиме тытăнчĕ. Ах, шăрши сăмсана ҫурать. Пĕрех хутчен хăҫан чĕлхе тӳрленĕ-ши? Канфет ҫеҫ ĕмсе пурăннипе хырăм тăранмасть-ҫке...

Ҫапла... Ҫав саманта аса илсен ҫӳҫ вирелле тăрать. Ҫуна тавраше курсан пуҫ ҫаврăнать. Авă килти ҫунана та ĕнер кĕлетех кайса хутăм. Куҫ ан куртăр терĕм. Ҫук, тем тесен те хĕллехи кунсем мана валли мар. Кĕркуннех аванччĕ. Тепĕр тесен, аннене пасартан ҫуна туянса пама ыйтатăп-ха, йывăҫран ăсталанине. Ан тив, Сашукпа Ленук ăмсанччăр мана.

# Хаваслă 2014 самант

## «Кушак» сăмах каçмăш




**Сылтăмалла:** 4. Пулă. 8. Патшалăх паракан пулăшу. 10. ...лă тăрăх. 11. Европăри çĕршыв тĕп хули. 13. Чăваш хĕрарăмĕн эрешĕ. 16. Сурăх çăмĕнчи çу. 17. ...па кушак типĕ тытмаççĕ. (ват.сăм.). 18. Вĕрентекен. 19. Çырла. 21. Чи пысăк кушак ăрачĕ. 22. Вырăс писателĕ тата журналисчĕ. 23. Килти чĕр чун.

**Аялалла:** 1. Тĕнчери пĕртен-пĕр «Кушаксен театрĕн» пуçлăхĕ. 2. Кушака кулă, ...е вилĕм (ват.сăм.). 3. «Арçури» баллада авторĕ. М.Федоров çуралнă ял. 5. Спортсмен. 6. Телефон шутласа кăларнă çын. 7. Мал ĕмĕтлĕхе ăнтăлни. 9. Çӳлĕк. 11. П.Хусанкай хайлавĕнчи сăнар. 12. Хаклă йышши чул. 13. Кăнтăрти халăхсен юрăçи. 14. Юлашки çулсенче шутласа кăларнă çыхăну хатĕрĕ. 15. Çĕршыври чи вăрăм юханшывсенчен пĕри.

## «Виçĕ спортсменка» пуç ватмăш



Юпасенче чăвашран тухнă паллă спортсменка хушамачĕсем. Сылтăмалла çырса, пушă клеткăсене тĕнчери, Раççейри, чăвашри паллă спортсменсен хушамачĕсене çырăр.

### 1-мĕш пуç ватмăш

1. СССРти паллă çăмăл атлет, виçĕ хут тапттарса тăршшĕне сикнĕ Олимп чемпионĕ. 2. Чăвашран тухнă паллă велосипедист, СССР чемпионĕ. 3. Паллă чăваш боксерĕ. 4. Мускаври «Спартак» командинче вылянă хапхаçă, СССР тата Раççей пĕрлештернĕ футбол командин вăйăçи. 5. Паллă совет хоккеисчĕ, Олимп тăрăхĕнчен тухнă штангист, Олимп чемпионĕ. 7. Кире пуканĕ йăтас енĕпе палăрнă чăваш спортсменĕ. 8. СССР штангисчĕ, Олимп чемпионĕ. 9. Тĕнчипе паллă теннисист.

### 2-мĕш пуç ватмăш

1. СССР тата Раççей шахматисчĕ, тĕнче чемпионĕ. 2. Олимп вăййисене хутшăннă чăваш çăмăл атлечĕ, спорт енĕпе палăрнă паллă педагог, тренер. 3. СССР пĕрлештернĕ йĕлтĕрçĕсен командинче тупăшнă Олимп чемпионĕ. 4. Чăваш республикин физкультурăпа спорт комитечĕн пуçлăхĕсенчен пĕри (1946-1952, 1956-1963). 5. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи умĕнхи çулсенчи Чăваш республикин физкультурăпа спорт комитечĕн пуçлăхĕ. 6. Хоккей çинчен çырнă Раççейри паллă спорт журналисчĕ. («Футбол-хоккей» еженедельник). 7. Каноэ кимĕпе ăмăртса 1964 çулта Олимп вăййисенче çĕнтернĕ СССР спортсменĕ. 8. Паллă СССР йĕлтĕрçи, Олимп чемпионĕ. 9. Чăвашсен паллă çăмăл атлечĕ, хăвăрт утас енĕпе бронза медаль çĕнсе илнĕ олимпиец.

### 3-мĕш пуç ватмăш

1. Шывра ишес енĕпе палăрнă Чăваш енри паллă тренер. 2. Чăваш Олимпиецĕ. 3. Олимп вăййисене çĕнĕрен чĕртсе тăратма хутшăннă француз обществăлла деятелĕ. 4. НХЛра выляна швед-сен паллă хоккеисчĕ. 5. Чăвашран тухнă паллă ухăçă. 6. СССРти паллă штангист, вуншар рекорд авторĕ. 7. Çăмăл атлетика енĕпе палăрнă Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ. 8. Йĕлтĕр спорчĕ енĕпе Олимп чемпионĕ ята тивĕçнĕ чăваш спортсменĕ. 9. СССРти палăрнă альпинист.

***Юрий ФРОЛОВ** (Шупашкар) хатĕрленĕ.*

## Ӳкерчĕклĕ сăмах каçмăш

Пушă клеткăсене ӳкерчĕксенчи ăнлавсене çырса вырнаçтарăр.




## Сăмах каçмăш



**Сылтăмалла:** 3. Суту-илӳ вырăнĕ. 8. Материк. 9. Казахсен тĕп хули. 10. Мăсăльмансен библийĕ. 11. Тахçанхи ташă: летка-... 12. Парагвайри чей. 13. Чăваш композиторĕсен «хуçи». 15. Юмахри Кайа шыракан. 18. Унта Одиссей пурăннă. 20. Велосипедпа чупакансен малти ушкăнĕ. 21. Ял хуçалăх специалисчĕ. 23. Уçланкăри ... (юрăран). 25. Имшер. 28. АПШри хула. 31. Пĕрне-пĕри пуссăр пулăшни. 32. Вăтам Азири бард. 33. Апат пĕçермелли «кăмака». 34. Республикăри район. 35. Унта хоккей вăййи çуралнă. 36. Сцена çинчи актер айккинелле пăрăнса калаçни.

**Аялалла:** 1. Вĕçевçĕсен терминĕ. 2. Дилер «юлташĕ». 3. Вăрманти чĕрчун. 4. Авалхи грексен ташши. 5. АПШри «дача». 6. Пуçа тăхăннă çĕршыв. 7. Римлянсен «карапĕ». 13. Ӳнерçĕн хайлавĕ. 14. Лавккари «сĕтел». 16. Уншăн Троя вăрçи пуçланнă. 19. Ют çĕршыври укçа. 22. Казаксен ялĕ. 23. Çурта кĕмелли ятарлă вырăн. 24. Генерал шăлаварĕн палли. 26. Вутă çурмалли хатĕр. 27. Франци поэчĕ. 29. Çĕр сийĕ. 30. Ĕлĕкхи почта çулĕ.

***Николай КРАСНОВ** (Йĕпреç районĕ) хатĕрленĕ.*